БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Август
14
ЭРНЕКУН
№ 159 (9068)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса совет çыннисем ĕçре тата пысăкрах çитĕнӳсем тăваççĕ (1 стр.).
Н. Волков.—Чĕререн тухакан сăмахсем (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Ф. Васильев. — Политикăлла витĕмлĕ агитацишĕн (2 стр.).
Г. Терновский.—Контроль правипе усă курасси. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци опытĕнчен (2 стр.).
РАЙОНТИ ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ. Шкулсене вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçĕн айккинче (2 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (2 стр.).
Виçĕ республика ăмăртăвĕ (3 стр.).
Государствăна тырă памалли плана срокчен тултарса, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тата ытларах çирĕплетер! (3 стр.).
Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче (3 стр.).
УЧИТЕЛЬСЕМ ЧĔЛХЕ ÇИНЧЕН. В. Антонов.—Чăваш чĕлхинчи падежсем пирки (3 стр.).
СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн ĕçĕсем çинчен тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ (3—4 стр.).
Францири забастовка вăйланса пырать (4 стр.).

Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларассишĕн

Пирĕн хăватлă социализмла Тăван çĕршыв коммунизм тумалли çулпа малалла шанчăклăн пырать. Рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, экономикăпа культурăна хăватлăн çĕклентермелли тата халăх пурнăçне малалла лайăхлатмалли программăна ăнăçлăн пурнăçлаççĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ решенисем йышăнчĕ. Сесси промышленноçпа ялхуçалăхĕ енĕпе вăраха ямасăр пурнăçламалли задачăсене тата халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатмалли мерăсене палăртрĕ.

Йывăр промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсен никĕсĕ çинче пирĕн халĕ халăха куллен кирлĕ япаласем туса кăларас ĕçе татăклăнах вăйлатма кирлĕ условисем пурте пур. Партипе правительство çакăн пек задача лартрĕç: икĕ-виçĕ çул хушшинче халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем — ашкакайпа аш-какай продукчĕсем, пулăпа пулă продукчĕсем, çу, сахăр, премĕк-канфет, пир-авăр, тумтир, атă-пушмак, савăт-сапа, сĕтел-пукан тата культурăпа йăла япалисемпе килте кирлĕ ытти япаласем ĕçсыннисене парса тăрассине чылай ӳстермелле.

Паллă ĕнтĕ, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планпа куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине 1955 çулта, 1940 çулхипе танлаштарсан, 65 процента яхăн ӳстерме палăртнă. «Пилĕк çуллăх планăн çак заданине чылай маларах тултарас тесе,— палăртрĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмахра,—халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине анлăн сарса пыма пирĕн майсем пур».

Çак пысăк задачăна татса парас ĕçре вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви вырăнти промышленноçпа промысла кооперацине пур майсемпе те аталантарма тăрăшаççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче халăха куллен кирлĕ таварсем, строительство материалĕсем, килте тата хуçалăхра кирлĕ япаласем туса кăларассине чылай сарма палăртнă. Пилĕкçуллăхра вырăнти промышленноçпа промысла кооперации предприятийĕсенче туса кăларакан продукцие 60 процента çити ӳстермелле. Съезд куллен кирлĕ таварсен ассортиментне нумайлатма, продукци пахалăхне хăпартма, таварсен хакне йӳнетме, тĕрлĕ мастерскойсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕ.

Правительство кăçал малтанлăха планпа палăртнинчен 20 миллиард тенкĕлĕх ытларах куллен кирлĕ таварсем туса кăларма задани панă. Халĕ, партипе правительство халăхăн пурнăçпа йăла тата культура условийĕсен шайне хăпартмалли анлă программăна пурнăçласа пынă вăхăтра, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнче ĕçлекенсен ответлăхĕ уйрăмах ӳсет. Райпромкомбинатсемпе промартельсен, куллен кирлĕ таварсем тăвакан ытти фабрикăсемпе заводсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатмалла, производство культурине çӳлĕ пусăма хăпартмалла.

Ĕçсыннисен пурнăçĕ тăтăшах лайăхланса пырать, культури ӳсет. Вĕсем пахарах та илемлĕрех таварсем туянасшăн. Çавăнпа куллен кирлĕ таварсен номенклатурипе ассортиментне нумайлатасси, чи çĕнĕ фасонсемпе модельсем тăрăх пысăк пахалăхлă япаласем туса кăларасси вырăнти промышленноçпа промысла кооперации работникĕсен хальхи пысăк та ответлă задачи пулать.

Шупашкарта, Çĕмĕрлере, Улатăрта тата ытти çĕрте те вырăнта туса кăларакан таварсен смотрĕ пулса иртрĕ. Смотр çакна уççăн кăтартса пачĕ: республикăри вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн пысăк пахалăхлă продукци туса кăларма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче вĕсем çĕнĕ оборудовани нумай туяннă, чĕртаварпа материалсем çителĕклĕ, техникăна алла илнĕ кадрсем ӳссе çитĕнчĕç.

Малта пыракан промкомбинатсемпе промартельсем шалти резервсемпе тата вырăнти чĕртаварпа усă кураççĕ, йывăр ĕçсене механизацилеççĕ, çавна пула продукци туса кăларассине ӳстереççĕ, таварсен ассортиментне нумайлатаççĕ, пахалăхшăн кĕрешеççĕ. Çĕмĕрлери, Шуркассинчи райпромкомбинатсем, «Паха тĕрĕ», «Дружба» промартельсем производство планне тăтăшах тултараççĕ, вĕсем туса кăларакан япаласене ĕçсыннисем тулли кăмăлпа туянаççĕ. Улатăр хулинчи промкомбинат йĕлтĕр тата хут купăс туса кăларать. Çав япаласене РСФСР Вырăнти тата топливо промышленность министерстви çумĕнче пулса иртнĕ смотрта ырланă. Шăмăршăри райпромкомбинат паха урапа кустăрми тата лайăх вĕлле туса кăларать.

Çакăн пек паха тĕслĕхсем пур пулин те, республикăри вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăçласа пыраймаççĕ, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерейменçĕ-ха. Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министерствипе Чăвашпромсовет продукци туса кăлармалли çурçулти плана иртт ерсе тултарнă. Çиелтен пăхсан, вĕсем аван ĕçлеççĕ, теме пулать. Чăннипе вĕсем планра палăртнă чи кирлĕ йышши продукцие туса кăлармаççĕ, çавна вара иккĕмĕш вырăнта тăракан япаласене планран иртт ерсе туса кăларнипе витме тăрăшаççĕ.

Строительство хăвăрт аталаннă май халăх хуçалăхне материалсем нумай кирлине пурте пĕлеççĕ. Ĕçсыннисем, колхозсемпе учрежденисем валли кирпĕч, черепица, известь çителĕклĕ туса кăларасси — промкомбинатсемпе промартельсен тивĕçĕ. Чăвашпромсовета пăхăнса тăракан промартельсем пĕрремĕш çурçуллăхра 400 пин ытла хĕртнĕ кирпĕч парса çитерейĕмен, хуласемпе районсенчи промкомбинатсем кирпĕч хĕртмелли плана 62 процент çеç тултарнă. Кирпĕч çитменни пурăнмалли çуртсене, шкулсемпе больницăсене, выльăх-чĕрлĕх витисене вăхăтра туса пĕтерме чăрмантарать. Сезон ĕçлениччен вăхăт нумай юлмарĕ. Кирпĕч тăвакан предприятисемпе артельсен руководителĕсен кашни кунпа лайăх усă курма, государство çирĕплетсе панă плана тултарма тăрăшмалла.

Урапа, йĕлтĕр, çăматă, тăм савăт-сапа, сĕтел-пукан, урапа-çуна, халăха куллен кирлĕ ытти япаласем туса кăлармалли плана тултарманни, çав вăхăтрах чăпта планран иртт ерсе нумай туса кăларни, складсенче кайман таварсем нумайланса пыни Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министерствипе Чăвашпромсовет ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартаççĕ. Таварсен смотрĕ вăхăтĕнче ĕçсыннисем хăйсен шухăш-кăмăлне каласа пачĕç. Вĕсем витре, валашка, умывальник, сăмавар трубиĕ, сĕтел-пукан, спорт инвентарĕ, ача-пăча теттисем нумайрах туса кăларма, япаласен пахалăхне лайăхлатма, вĕсене паха, тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе сăрласа илемлетме, уйрăмах таварсен хакне йӳнетме сĕнӳсем нумай пачĕç. Предприятисемпе промартельсен, Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министерствипе Чăвашпромсовет руководителĕсен ĕçсыннисен критикиленинчен тивĕçлĕ вывод тумалла.

Государство çирĕплетсе панă стандартсемпе техникăлла условисем тăрăх çеç продукци туса кăлармалла, çакă вăл çирĕп закон пулмалла. Япăх продукци туса кăларма никама та ирĕк паман. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнче ĕçлекен кашни çыннăн çакна лайăх пĕлсе тăмалла; юрăхсăр, çынсен кăмăлне кайман продукци туса кăларни чĕртаварпа материалсене, ĕç вăйне сая яни çеç пулать. Брак туни государствăна пысăк сиен кӳрет, халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерме чăрмантарать. Паха сĕтел-пукан е савăт-сапа пӳрт илемне кӳрет, лайăх çĕленĕ атă-пушмак е тумтир совет çыннин кăмăлне хăпартать. Кашни коллектив хăйĕн фабрики е завод чысĕшĕн, предприяти маркине çӳлĕ шайра, хисеплĕ вырăнта тытассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрештĕр.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперации ĕçне лайăхлатасси суту-илӳ организацийĕсенчен те сахал мар килет. Вĕсен промкомбинатсемпе промартельсем тăратакан таварсене тиркерех йышăнмалла, халăха мĕнле йышши япаласем нумайрах кирлине, мĕнле таварсем кайманнине вăхăтра пĕлтерсе тăмалла.

Куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ туса кăларасси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси вырăнти промышленноçпа промысла кооперации предприятийĕсене райсоветсемпе хула Совет исполкомĕсем, КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсем куллен ертсе пынинчен, вĕсен экономикипе тĕплĕн интересленнинчен, умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçласа пыма унти коллективсене мобилизацилениинчен нумай килет.

Вырăнти промышленноçпа промысла кооперации работникĕсене коммунизмла воспитани парасси, вĕсен пурнăçпа йăла тата культура условийĕсене лайăхлатасси—партипе Совет органĕсен тивĕçĕ. Уйрăмах социализмла ăмăртăва анлăрах сарма, критикăна вăйлатма, производствăри çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшас пулать.

Государствăна тырă памалли плана тултарнă

УЛАТĂР, августăн 11-мĕшĕ. (Телеграфпа). Улатăрти совхоз государствăна тырă памалли плана августăн 9-мĕшĕ тĕлне, палăртнинчен 20 кун маларах, тултарчĕ. Пĕтĕмпе 4.000 центнер тырă панă. Хатĕрлев пунктне планран иртт ерсе тырă леçетпĕр.

КОРОЛЬКОВ.

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса совет çыннисем ĕçре тата пысăкрах çитĕнӳсем тăваççĕ

Партипе правительство кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлаççĕ

КИЕВ. Украина столицинчи нумай заводсемпе фабрикăсенче СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн материалĕсене тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире тухса каланă сăмаха коллективлăн вуланă.

— Пирĕн тăван Коммунистсен партийĕ совет халăхне коммунизм çĕнтерĕвĕ патне çирĕппĕн те шанчăклăн илсе пырать,— тенĕ «Большевик» заводри вăтă сталевар П. А. Шука юлташ.—Маленков юлташ промышленноçпа ялхуçалăх умĕнче вăраха ямасăр татса памалли задачăсем çинчен, совет халăхĕн материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатмалли ĕçсем çинчен тĕплĕн те яр-уççăн каласа пачĕ. Эпир, сталеварсем, тата лайăхрах ĕçлеме, пысăк пахалăхлă металл ытларах туса кăларма, хамăр предприятисене тухăçлăрах ĕçлеттерме пултаратпăр.

Андреев ячĕпе тăракан депо машинисчĕ Н. Н. Козлов çапла каланă:

— Пирĕн бригада ĕнер СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахне уйрăмах пысăк тимлĕхпе итлерĕ. Вăл «сивĕ вăрçă» вăрçакансене тата аслă Совет Союзĕпе «вăй чĕлхипе» калаçма пăхакансене тивĕçлĕ ответ пачĕ.

«Укркабель» заводри аслă мастер Б. И. Романовский çапла калать:

— Коммунистсен партийĕ совет çыннисемшĕн куллен тăрăшать. Халĕ парти çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçне хăвăрттăн аталантарма, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çĕкленӳ тума, пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла учрежденийĕсене хăвăртрах тума хушать. Пирĕн тивĕç вăл хамăрăн тăван Совет правительстви кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе хамăр енчен мĕн тума пултарнине пурне те тăвасси пулать.

Совет Украининчи ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствин шалтипе тулашри политикине пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ. Вĕсем Г. М. Маленков юлташ сăмахĕнче кăларса тăратнă вăраха ямасăр татса памалли задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешме хатĕр тăни çинчен пĕлтереççĕ.

Пирĕн ĕçе никам та çĕнтереймĕ

МИНСК. Белоруссин столицинчи ĕçсыннисем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмаха радио тăрăх пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Минскри трактор завочĕ. Çак çамрăк предприятин пĕтĕм историйĕ вăл социализмла индустри тăвăллăн аталанса пынине кăтартса паракан истори пулса тăрать. Паян заводри пăхăр шăратакан участока пăхăр шăратакансем пуханнă. Парторг Протасенко юлташ çапла калать:

— Г. М. Маленков юлташ сăмахĕнче пире, тракторсем тăвакансене, тӳртен тивекен сăмахсем пур. Пирĕн завод çĕршыври вăрман хуçалăхне машинăсем тăратать. Эпир мĕн чухлĕ ытларах тракторсем туса кăларатпăр, вĕсем мĕн чухлĕ пахарах пулаççĕ, вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен заданийĕсене çавăн чухлĕ ăнăçлăрах тултарĕç. Пирĕн тивĕç вăл тракторсем ытларах туса кăларасси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси пулать.

Рабочисен шухăшĕсемпе туйăмĕсене сталевар А. Райентов хăйĕн сăмахĕнче питĕ лайăх кăтартса парать.

— Эпир плана пур показательсем тăрăх та иртт ерсе тултарассишĕн пĕтĕм вăйя хурса кĕрешме пултатпăр, Тăван государствăна çĕнĕрен миллионшар тенкĕ укçа перекетлесе парар. Çак укçа вăл çĕнĕ шкулсем, ача сачĕсем, больницăсем, пурăнмалли çуртсем тума каять.

— Эпĕ Маленков юлташăн сăмахне пысăк хумханупа итлерĕм, — тет электрик Шатуновский.—Партипе правительство туса иртт ерме палăртнă ĕçсем халăх интересĕсемшĕн тăрăшни çинчен калаççĕ. Эпир пысăк пахалăхлă продукци ытларах туса кăларма, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме сăмах паратпăр.

Смена вĕçленнĕ тĕле литейщиксем заданипе палăртнинчен 30 процент ытларах металл шăратса кăларнă.

Нефтяниксен сăмахĕ

БАКУ. Пиншер нефтяниксем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахне радио тăрăх итленĕ.

— Пирĕн халăх Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тĕлĕнмелле чаплă çитĕнӳсем туни çинчен каланă сăмахсене илтсен пĕтĕм чĕре савăнать, — тенĕ Ильич бухтинче ĕçлекен оператор Довлят Гувбатов.—Пирĕн çĕршыв индустриллĕ хăватлă держава пулса тăчĕ. Халĕ партипе правительство халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине нихçанхинчен те ытла вăйлатма решени йышăнчĕç. Эпĕ партире тăман рабочи. Эпĕ çакна лайăх пĕлетĕп: Коммунистсен партийĕн сăмахĕ нихçан та ĕçрен уйрăлмасть. Икĕ-виçĕ çултан пирĕн çĕршывра апат-çимĕçпе таварсем ытлашшипех çителĕклĕ пулĕç. Эпир кашниех хамăрăн тӳрĕ ĕçпе государствăна пулăшăпăр.

Баку хулинчи нефтяниксем СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă ССР Союзĕн 1953 çулхи Государство бюджечĕпе ялхуçалăх налогĕ çинчен кăларнă Закона чĕререн ырлаççĕ.

ĔÇРИ ÇĔКЛЕНӲ

Уй-хир ĕçĕсем кунтан-кун сарăлса пыраççĕ. Тырă вырнипе пĕр вăхăтрах кĕлте кĕртеççĕ, аван çапаççĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ, кĕрхи тырăсем акаççĕ.

— Колхозниксем хальхи пек хавхаланса ĕçленине курман,—терĕ колхоз председателĕ Н. Краснов юлташ.—Ĕçри çĕкленӳ уйрăмах сесси хыççăнхи кунсенче пуçланчĕ.

Кунта КПСС райкомĕн секретарĕ М. Евдокимов тата райисполком председателĕ Н. Смыков юлташсем килнĕ. Вĕсем сесси решенийĕсем çинчен хирте ĕçлекен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ, ыйтусем çине ответлеççĕ. Смыков юлташ çавăнтах нумай ачаллă амăшĕсене правительство наградисене—орденсемпе медальсем пачĕ.

— Тавтапуç партипе правительствăна пире, простой çынсене, пысăк хисепе хунăшăн,—тет Алевтина Харитонова колхозница III-мĕш степеньлĕ «Ача амăшĕн мухтавĕ» орден илсе.

Сесси йышăннă законсем колхозниксене чун-чĕререн савăнтараççĕ. Вĕсем, чĕререн тухакан ăшă сăмахсем каласа, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине тав тăваççĕ, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ырми-канми ĕçлеме сăмах параççĕ.

— Çăмăллăх хыççăн çăмăллăх парать пире Совет правительстви,—терĕ 75 çулхи Димитрий Захарович Захаров юлташ.—Иртнĕ çулхи парăмсене каçараççĕ, кăçалхи налога чакараççĕ, килес çулхи налог пĕлтĕрхинчен 2,5 хут сахалтарах пулать. Государство пирĕншĕн çавăн пек тăрăшать, эпир те тăрăшар, çителĕклĕ тырпул туса парар!

Верховнăй Совет йышăннă законсем ялхуçалăхне çĕклеме, колхозсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшни çак кунсенчех уççăн палăрчĕ. Сесси решенийĕсем çинчен ăнлантарса панă хыççăн, ĕçе хутшăнакансен хисепĕ хăвăрт ӳсрĕ.

— Паян, пирĕн уй-хирте сахалтан та 250 çын ĕçлет,—терĕ колхоз председателĕ Н. Краснов юлташ.

Анчах артельте ĕçченсем хыçĕнче пытанса пурăнакан тӳрĕ мар çынсем те пур-ха. Хирте ĕçлекенсем Н. Чернова, А. Романова, М. Шмелева ячĕсене тарăхса питлерĕç. Вĕсем, колхозник ячĕпе витĕнсе, ĕçрен пăрăнса тĕрлĕ çĕрте çӳреççĕ, кăçал пĕр ĕçкунĕ те туман.

— Ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксене ялхуçалăх налогĕ 50 процент ӳстерсе тӳлеттерни кахалсене те ĕçлеме вĕрентĕ,—теççĕ савăнса тӳрĕ кăмăллă колхозниксем.

Хастарлă ĕç тухăçлă пулать. 5-мĕшпе 6-мĕш бригадăсем ыраш кĕлтине часах кĕртсе пĕтереççĕ, çĕрĕн-кунĕн аван çапаççĕ. М. Миронов коммунист ертсе пыракан транспорт бригади Тĕрлемесри хатĕрлев пунктне кашни кун тырă леçет. Эпир унта пулнă кунхине В. Петров шофер, 4 рейс туса, 10 тонна ытла ыраш леçрĕ. Тырă турттарма лавсем те уйăрнă. Колхоз графика чылай иртт ерсе тултарнă.

Колхоз килес çулхи тырпул никĕсне хывма тытăнчĕ: 100 гектар ытла ыраш акнă. МТС-ăн А. Скворцов юлташ ертсе пыракан бригади çак ĕçре те малта пырать.

— Партипе правительство ялхуçалăхне çĕклессишĕн тăрăшнипе хавхаланса, пирĕн колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене районта малта пыракан колхозсемпе пĕр вăхăтра вĕçлĕ,—тет правлени председателĕ Краснов юлташ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

«Новый путь» колхоз,
Куславкка районĕ.

Ĕçленĕ çемĕн ĕçлес килет

СĔНТĔР. Колхозлă ялăн ĕçченĕсем ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă законсене тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. «Большевик» колхозри пур бригадăсенче те агитаторсем сесси материалĕсене вуласа параççĕ тата вĕсем тăрăх калаçусем иртт ереççĕ.

— ССР Союзĕн çĕнĕ бюджечĕ совет халăхĕн интересĕсене палăртса тăрать, вăл пирĕн государствăн хăвачĕпе вăйĕсене малалла тĕреклетме, экономикăпа культурăна тата наукăна вăйлатма, ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшать. Çĕршывăн аслă органĕ ялхуçалăх налогне чылай чакарма палăртнă. Çакă вăл колхозсене ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма тата колхозниксен тупăшне ӳстерме пулăшать. Партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн, унăн пурнăçне пур майсемпе те лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе хавхаланса манăн ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет, Тăван çĕршыва татах та пуян, татах та хăватлăрах тăвас килет.

— Эпĕ,—тет М. Яшмуркина колхозница,—кăçал 200 ĕçкунĕ ытла турăм. Тăрăшса ĕçлекенсем пирĕн колхозра нумай. Çав хушăрах колхоз правленинчен ыйтмасăр аякра ĕçлесе çӳрекенсем те пур-ха пирĕн. Вĕсем колхоз хуçалăхне тĕреклетме тăрăшмаççĕ. Колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарса пыман колхозниксене ялхуçалăх налогне 50 процент хушса тӳлеттермелле туни питĕ тĕрĕс.

СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă законсемпе хавхаланса, «Большевик» колхоз членĕсем государствăна тырă памалли плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. «Ударник», «Броневик» ялхуçалăх артелĕсен ĕçченĕсем те хăйсем çине пысăк обязательствăсем илнĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.
(Хамăр корр.).

Чĕререн тухакан сăмахсем

ÇĔРПӲ. Рынка сали урамĕсем шăпах. Шоссе çулĕпе çеç, вăхăтран вăхăта, тырă тиенĕ лавсемпе автомашинăсем чугун çул станцийĕ еннелле е каялла шавласа иртеççĕ. «Новая жизнь» колхоз членĕсем—вăйпитти арçынсемпе хĕрарăмсем хальхи хĕрӳ тапхăрта уй-хирте, итемсем çинче, фермăсенче, строител[illegible] площадкинче ир тытăнса каç пуличчен ĕçлеççĕ.

Аркадий Николаевич Зюзин юлташ ертсе пыракан 4-мĕш уй-хир бригадин итемĕ. 30 çын ытла кунта пăрса çапаççĕ. Мăн Çавал енчен çулса пухнă пăрçана тиенĕ лавсем пĕрин хыççăн тепри к[illegible]се тăраççĕ, тепĕр енче, ирĕк вырăнта, çапнă пăрçа уламне ура тăваççĕ. Вăхăт ытла та кĕске, тулăпа сĕлĕ, урпа пулса çитрĕç, часрах вырмалла, бригадир халĕ пăрçана хăвăртрах çапса пĕтерме васкатать.

Васкатма та кирлĕ мар. Хальхи кунсенче колхозниксем икĕ хут пысăкрах хастарлăхпа ĕçлеççĕ. «Новая жизнь» колхоз членĕсен кашнин килĕнчех радио пур. Вĕсенчен нумайăшĕ августăн 5-мĕшĕнче çĕрле тата тепĕр кунне Мускаври ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн черетлĕ сессийĕ уçăлни, халăх депутачĕсем Государствăн 1953 çулхи бюджечĕ çинчен, иртнĕ икĕ çулсенчи бюджетсене мĕнле пурнăçлани çинчен сӳтсе явма тытăннине пĕлнĕ.

Пысăк хыпар илтсессĕн ăна тата тĕплĕнрех пĕлес килет. Ирхине ĕçе пикенсенех колхозниксем Верховнăй Совет сессийĕнче ССР Союзĕн Финанс министрĕ Зверев юлташ тунă доклад пирки калаçма тытăннă. Çакăн пек чухне агитаторсем питĕ кирлĕ те ĕнтĕ.

Кăнтăрлахи апат умĕн итем çине КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ П. Александров юлташ çитрĕ.

Вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх хуçалăхне хăватлăн аталантарма пысăк программа палăртни çинчен, халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культурăллă шайне малалла ӳстерме ырми-канми тăрăшни çинчен калать, Правительство Верховнăй Совет сессийĕнче çирĕплетме тăратнă бюджетăн цифрĕсемпе паллаштарать.

Ялхуçалăхне тата хăвăртрах аталантармалла тăвас тĕлĕшпе Правительство пысăк ĕçсем туса иртт ересси, халăх валли ялхуçалăх продукчĕсем, промышленность валли чĕртавар тăратассине ӳстересси, колхозсемпе колхозниксене экономика енĕпе интереслентересси, ялхуçалăх налогĕ хумалли çĕнĕ йĕрке пуласси çинчен каланине колхозниксем тулли кăмăлпа итлеççĕ.

Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче калаçăва сехечĕпе [illegible] çук ĕнтĕ, анчах çавăн пек савă[illegible] хыпара илтсен ăшри хаваслă ту[illegible] çинчен каламасăр кам чăтĕ.

Вăтă колхозница, маларах тухрĕ те, хыттăн каларĕ:

— Эпĕ Гаранина хушаматлă, çырса ярсамăр Мускава, правительствăна, чи аслисем патне,—терĕ вăл,—пирĕншĕн тăрăшнăшăн эпир вĕсене пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр.

— Спасибо, спасибо!—кĕрлесе илчĕ халăх пĕр вăхăт хушши.—Куншăн тав тума чи ырă сăмахсем тупма пĕлмелле.

— [illegible] мар çине,—тет малалла Гаранина юлташ,—старикпе иксĕмĕр те 60-шар çула çитрĕмĕр, анчах ĕçсĕр ларас килмест. Старик пушара хирĕç кĕрешекен командăра ĕçлет, эпĕ—сирĕнпе. Мана ĕçе чĕнекен те çук. Анчах уй-хирти пысăк пуянлăха курсан, килте ларма чун чăтмасть.

— Пурте сан пек ĕçлесен, эпир паянхи кун тĕлне тата нумайрах ĕç тумалла,—терĕ карчăкпа юнашар тăракан çамрăкрах колхозница.

— Пăртак канам-ха, тесе шутланăччĕ,—тет вăтă колхозница.—Халĕ, ку ырă хыпара илтрĕм те, суранĕ суран мар, ывăнни—ывăнни мар. Пиртен, старикпе иксĕмĕртен налог ыйтмаççĕ мĕн, пахчара хамăра кăмăла мĕн килнĕ çавна акса тума, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме ĕнеççĕ. «Эсир, Гаранинсем, тата лайăхрах, савăнăçларах пурăнăр», тени ĕнтĕ ку. Мĕншĕн ĕçлес мар-ха кун хыççăн халăхпа пĕрле?

— Пурнăç лайăхланать те лайăхланать,—терĕ Зюзин бригадир, хаваслăн пăхса.—Мĕн чухлĕ пирĕн пуянлăх. Кăçал пур йышши культурăсене те планпа палăртнинчен нумайрах пухса кĕртетпĕр. Ăна май колхозниксен тупăшĕ те ӳсет. Ĕçкунĕ тăрăх тырăпа пахча çимĕç кăна мар, укçа, сĕт валеçекен пултăмăр. Нумай çул ӳсекен курăксем акăнакан пусă çаврăнăшне пурнăçа кĕртни колхозниксене ĕне-сурăх валли утă валеçсе пама май туса хучĕ. Халĕ, акă, тата тепĕр çăмăллăх илетпĕр. Пурнăç тата хăвăрттăн чечекленесси—куç умĕнче.

Итем çине ялти пуçламăш шкулти ватă учитель Андрей Ильич Серяпин юлташ çитрĕ. Халăха çутта кăларас ĕçре вăл кăçалхипе 56-мĕш çул ĕçлет. Совет правительстви ăна Ленин орденĕпе наградăланă. Вăл РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕн ятне илме тивĕç пулнă.

— «Ĕçпе хытнă алăсене мухтав та чыс», тенĕ ĕлĕкех пирĕн çĕршыври малта пыракан прогрессивлă çынсем, халăх майлă пулса,—терĕ вăл, çĕкленӳллĕ сассипе.—Анчах патша самодержавийĕ ĕçпе хытнă алăллă ĕçсыннисене çын вырăнне хуман.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тунă совет стройĕ çеç пирĕн çĕршыври ĕçсыннисене калама çук çӳле çĕклерĕ. Çыншăн тăрăшасси пирĕн партипе правительство ĕçĕнче тĕп закон пулса тăчĕ.

4-мĕш уй-хир бригадинче те ССР Союзĕн Верховнăй Совет сессийĕн ĕçĕсем çинчен калаçу пысăк активлăхпа иртрĕ. Пурин те—пĕр шухăш, пĕр сăмах:

— Темĕн пекех пысăк спасибо партипе правительствăна пирĕн ырлăхшăн тăрăшнăшăн.

Калаçу майĕпенех колхоз пурнăçĕн ыйтăвĕсем çине куçать. Колхозниксен пĕр тĕллев: пĕтĕм тырпула хăвăрт пухса кĕртмелле, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçламалла, колхозниксен тулăх пурнăçĕн çăлкуçне—общественнăй хуçалăха малалла тĕреклетмелле.

— Партипе правительство пирĕн пурнăçа тата лайăхрах, савăнăçлăрах тума тăрăшаççĕ пулсан, эпир ăна ĕçри çитĕнӳсемпе ответлеме тивĕçлĕ,—терĕ ватă колхозник Иван Иванович Федотов юлташ.

Кунпа пĕрлех вăл правление критиклесе илчĕ.

— Пирĕн хушăмăрта вăйăн-шайăн ĕçлекенсем, колхоз производствинчен пăрăнакансем пулкалаççĕ-ха,—терĕ вăл.—Чăн та, налог хумалли çĕнĕ йĕрке çавнашкал çынсене питех иртĕме парас çук, анчах пирĕн хамăрăн та вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăлармалла. Колхоз ĕçне хисеплемен çынсене хирĕç пирĕн правлени пур чухне те татăклă мерăсем йышăнмасть-ха.

Партипе правительство социализмла ялхуçалăхне аталантарас, колхозниксен пурнăçĕпе культура шайне хăпартас тĕлĕшпе йышăннă мерăсене «Новая жизнь» колхоз ĕçченĕсем, пĕтĕм чунтан-чĕререн ырлаççĕ, ялхуçалăх çулне çĕнĕ çитĕнӳсемпе вĕçлеме сăмах параççĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Политикăлла витĕмлĕ агитацишĕн

Кăçал пирĕн артель членĕсем тухăçлă тырпул ўстерчĕç. Халĕ вĕсем ăнса пулнă тырпула пухса кĕртеççĕ. Ырашă кĕске вăхăтра вырса пĕтерчĕç, çийĕнчех сурттыррисем вырма тытăнчĕç. Çав вăхăтрах авăн çапса вĕрлĕх хываççĕ, государствăна тырă леççĕ.

Тырпул пухса кĕртесси — вăхăтра тумалли ĕç. Çак ответлă ĕçе туса ирттерме эпир малтанах тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Хăвăрт тата лайăх ĕçлеме мĕн кирлине йăлтах туса çитертĕмĕр. Ĕçĕн калăпăшне тата хамăрăн вăйсемпе майсене шута илсе, тырпул пухса кĕртнĕ, государствăна тырă панă вăхăтри ĕçсен планне туса çирĕплетрĕмĕр. Ырашă сакăр кун хушшинче, сурттыррисене вунă кун хушшинче пухса кĕртме палăртрăмăр. Çак плана колхозниксен пухăвĕнче сўтсе яврăмăр. Унтах ял ĕçченĕсен хальхи вăхăтри задачисем çинчен каласа патăмăр.

Эпир лайăх пĕлетпĕр: хуçалăхла ĕçсен ăнăçлăхĕ, чи малтанах, партилле-политикăлла ĕçе лайăх йĕркелесе тата витĕмлĕн туса пынинчен килет. Ку тĕлĕшпе парторганизаци тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтри партилле-массăлла ĕçсен планне туса çирĕплетрĕ. Çак ĕçе туса пыма партипе комсомол тата ялти активпа интеллигенцин вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухрăмăр. Уй-хир бригадисенче, итемсем çинче калаçусем ирттерме, хаçатсем вуласа пама тата боевой листоксем кăларма пултарулла агитаторсене уйăрса çирĕплетрĕмĕр. Пирĕн колхозри кашни бригада пĕрпĕрипе ăмăртса ĕçлет. Бригадăсем хушшинчи ăмăрту мĕнле пынине çутатса пыма колхозра кăтарту хăми турăмăр.

Тырă пĕтĕм лаптăк çинче пулса çитессе кĕтсе тăмарăмăр, уйрăм участоксем çинче суйласа вырма тытăнтăмăр. Тепĕр икĕ кунтан вара артель членĕсем тырпул пухса кĕртме массăллăн тытăнчĕç. Колхозниксем тухăçлă ĕçлетчĕр тесе, бригадăсенче пĕрлешўллĕ столовăйсем турăмăр.

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн малтанхи итогĕсем çинчен колхоз правленийĕпе парторганизаци активпа пĕрле сўтсе яврĕç. Унта çакă паллă пулчĕ: бригадăсем хушшинчи ăмăртура Е. Пучковский юлташ ертсе пыракан 3-мĕш бригада малта пырать. Ку бригада ĕçе тĕрĕс организациленĕ, вăхăтпа туллин усă курса ĕçлет. Çав вăхăтрах 1-мĕш бригада бригадирĕ Г. Петров юлташ тырпул пухса кĕртес ĕçĕн ответлăхне кирлĕ пек туйса илмен. Вăл, ĕçе тивĕçлипе организацилес вырăнне, уйрăм çынсем валли ниме тунă, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тырпул пухса кĕртес ĕçсенчен пăрса хăварнă. Çак йăнăша колхоз правленийĕ те асăрхаса илеймен. Вулав çурчĕ те культурăлла-массăлла ĕçе малтанхи кунсенче хире куçарман пулнă. Асăннă çитмерлĕхсене çийĕнчех тўрлетрĕмĕр.

Çакăн хыççăн пур бригадăсем те пĕр тикĕс ĕçлеме пуçларĕç, социализмла ăмăртăва ытларах вăйлатрĕç.

3-мĕш бригадăра партилле-политикăлла ĕçе ытти бригадăрисенчен лайăхрах та витĕмлĕрех туса пыраççĕ. Кунта агитатор пулса М. Иванов коммунист ĕçлет. Вăл колхозниксем хушшинче тăтăшах политикăлла калаçусем ирттерет, социализмла ăмăртăвăн итогĕсене куллен туса пырать.

Хĕрўллĕ сăмахпа кăна мар, вăл хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе те колхозниксене мала тухма хавхалантарса пырать. Иванов юлташ тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте куллен-хи нормăна 150 процент тата ытларах та тултарать. Халĕ ку бригадăри нумай колхозниксем нормăна чылай ирттерсе тултарса ĕçлеççĕ. Бригада пуринчен малтан авăн çапма, государствăна тырă пама тытăнчĕ.

Çак бригадăри опыта пур бригадăсене те сарас тĕлĕшпе боевой листоксем кăларса ăнлантарса патăмăр, колхозниксем хушшинче калаçусем ирттертĕмĕр. Çакăн хыççăн ытти бригадăсенчи колхозниксем те ĕç тухăçлăхне нумай ўстерчĕç. Ырашă кĕске вăхăтра тата тирпейлĕ вырса пĕтерчĕç. Халĕ пур бригадăсем те сурттырри выраççĕ.

Тырпул пухса кĕртме колхоза МТС механизаторĕсем вăйлăн пулăшаççĕ. Колхозра самоходнăй комбайн ĕçлет. Комбайнпа тухăçлă ĕçлеме мĕн кирлине йăлтах турăмăр. Васильева комбайнер сменăри нормăна яланах ирттерсе тултарать. Комбайнпа вырнă участоксем çинчен гектартан 100—120-шер пăт ыраш пухса илтĕмĕр.

Пирĕн колхозниксем государство умĕнчи тивĕçе яланах мала хураççĕ. Авăн çапма тата государствăна тырă пама вырма тухсан виç-тăватă кунтанах тытăнтăмăр. Государствăна çĕнĕ тырă парса, Выла пристанĕнчи хатĕрлев пунктĕнче пĕрремĕш квитанци илтĕмĕр. Хатĕрлев пунктне куллен пĕр автомашинăпа тата вунă лавпа тырă леçсе тăтăмăр. Автомашина кунне 3—4-шар рейс тăвать. Колхоз тырă памалли графика икĕ-виçĕ пилĕккунлăхшăн малалла тултарса пырать. Ыраш памалли плана тултартăмăр, кĕçех сурттыррисем пама тытăнатпăр. Çав вăхăтрах акма кирлĕ чухлĕ ыраш вăрлăхĕ хатĕрлерĕмĕр.

Колхозниксем хушшинчи политикăлла агитацие куллен вăйлатса, витĕмлĕрех туса пыма тăрăшатпăр. Иртнĕ кунсенче кашни бригадăрах «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен» темăпа калаçусем ирттертĕмĕр. Хальхи вăхăтра СССР Верховнăй Совет сессийĕн материалĕсене тата сессире Г. М. Маленков юлташ тухса каланă сăмаха ăнлантаратпăр. Колхозниксем, пирĕн парти ĕçсыннисен ырлăхĕшĕн куллен тăрăшнипе хавхаланса, малашне тата та пысăк хастарлăхпа ĕçлеме пулчĕç.

Çакна та палăртас килет. Колхоз правленийĕпе парторганизаци тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçе ертсе пырассине коллективлăн туса пыраççĕ. Çакă вăл ĕçе паянхи задачăсем ыйтнă пек организацилеме, ытларах ўсĕмсем тума май парать.

Пирĕн колхоз тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕçсенче районта малта пырать. Партилле-политикăлла ĕçе тата колхозниксем хушшинчи социализмла ăмăртăва ытларах вăйлатса пырса, государствăна срокчен тырă парса татассишĕн, пĕтĕм ялхуçалăх ĕçĕсене районта пуринчен малтан вĕçлессишĕн кĕрешетпĕр.

Ф. ВАСИЛЬЕВ,
Хрущев ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ.
Советски районĕ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Шкулсене вĕренў çулне хатĕрлес ĕçĕн айккинче

Парти организацийĕсем, Советсем, ĕçсыннисем пулăшнипе республикăри шкулсем вĕренў çулне тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Вĕсем çитес вĕренў çулĕнче Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕн директивисенче халăха вĕрентес ĕçе малалла лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама кирлĕ условисем тăвас тĕлĕшпе хĕрсе ĕçлеççĕ.

Паллах ĕнтĕ, вĕренў çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илни пурне те çичĕ çул вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртмелли, вĕрентў пахалăхне тата çўлерех сыпăка хăпартмалли условисенчен пĕри пулса тăрать.

Пирĕн пичет çак ĕçрен пăрăнса тăма пултараймасть. Шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлеме пулăшас ĕçре хаçат хăйĕн коллективла агитатор, коллективла пропагандист тата коллективла организатор рольне анлăн палăртма тивĕçлĕ. Анчах хăшпĕр районти хаçатсем çак ĕçе хаклаmaççĕ-ха.

КПСС Чурачăк райкомĕ шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен кăçалхи апрелĕн 29-мĕшĕнчех решени йышăннă пулнă. Анчах районти «Сĕнтерўшĕн» хаçат (редакторĕ П. Павлов) хăйĕн страницисем çинче шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлес ыйтусене майăн 31-мĕшĕччен тапратман.

Çав кун вара хаçат Кăшнăруйĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлеме тытăнни çинчен хăйĕн вулакан'ĕсене вунпĕр строкаллă заметкăпа пĕлтернĕ.

Июнĕн 4-мĕшĕнче хаçат «Çĕнĕ вĕренў çулне тĕплĕн хатĕрленер» ятлă умстатья пичетлет.

«Паян эпир шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлес тĕлĕшпе Сĕрпў районĕнчи халăха вĕрентес ĕç работникĕсем, ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсем тата обществăлла организацисен руководителĕсем пирĕн района ăмăртăва чĕнсе илнĕ социализмла обязательствăсене пичетлетпĕр»,—тет хаçат хăйĕн умстатьинче. Малалла вăл парти, совет тата профсоюз организацийĕсене шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесе çитерес ĕçе активлăн хутшăнма чĕнет. «Сĕрпў районĕпе ăмăртса ĕçлесе мала тухассишĕн тăрăшар!»—тенĕ статьяра.

Хаçат шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлес тĕлĕшпе икĕ район хушшинчи социализмла ăмăртăвăн организаторĕ пулса тăрĕ, вăл çак ăмăртура Чурачăк районне малти вырăна тухма çине тăрса пулăшĕ,—темелле пекчĕ малтанах.

Анчах хаçат икĕ район хушшинче пуçарса янă социализмла ăмăртăвăн организаторĕ пулмарĕ.

Июнĕн 4-мĕшĕ хыççăн 24 кун хушши (çак хушăра хаçатăнултă номер пичетленсе тухнă) «Сĕнтерўшĕн» хаçат шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлесси районта мĕнле пыни çинчен асăнмарĕ те. Июнĕн 28-мĕшĕнче, июлĕн 5, 12 тата 26-мĕшĕсенче тухнă номерсенче хаçат вĕренў çулне хатĕрленни çинчен пĕрер пĕчĕк заметка пичетлесе кăларчĕ.

Анчах июнĕн 4-мĕшĕнче Сĕрпў районĕ Чурачăк районне социализмла ăмăртăва чĕнни çинчен пĕлтернĕ хыççăн, хаçат паян кунччченех çав ăмăрту пирки пачах асăнмасть. Сĕрпў районĕнчи ĕçсыннисем шкулсене çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрлес тĕлĕшпе социализмла ăмăртăва чĕннине Чурачăк районĕнчи ĕçсыннисем йышăннă-и е йышăнман—вулакан хаçат страницисенче çак ыйту çине ответ тупаймасть.

Хаçат июлĕн 5-мĕшĕнче тухнă номерĕнче район Совечĕн черетлĕ виççĕмĕш сессийĕ пулса иртни çинчен информаци пичетлесе кăларчĕ. Сесси иртнĕ çулти вĕренў çулĕн итогĕсем тата çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленес ĕçри задачăсем çинчен сўтсе явнă. Анчах кунта çакна каласа хăвармасăр иртсе каймa çук. Хаçат вĕренў çулне хатĕрленесси çинчен критикăлла пĕр статья е заметка та пичетлесе кăларман, район Совечĕн сессийĕ çинчен пичетленĕ информацире те критикăран пăрăнса иртсе каять. Ĕçри çитменлĕхсене палăртса, хаçат никама та критиклемест, çитменлĕхсемшĕн айăплă пĕр работника та тĕкĕнмест.

«1953—54 вĕренў çулне хатĕрленес ĕç районта питех те çителĕксĕр пырать. Иртнĕ вĕренў çулĕнчи пысăк çитменлĕхсене шута илмен шкулсен руководителĕсемпе ял Совечĕсен председателĕсем кăçал та пур-ха»,— тесе çырать хаçат.

Хăш шкулсен руководителĕсем? Хăш ял Совет председателĕсем? Камсем вĕсем? Çак ыйтусене хирĕç хаçатра ответ тупма çук.

Малалла хаçат çапла çырать:

«Хăшпĕр шкулсен руководителĕсемпе ял Совечĕсен председателĕсем шкул çурчĕсене юсас е çĕнĕрен тăвас ĕçсене питĕ вăраха яраççĕ».

Каллех пĕр шкула та тата пĕр ял Советне те тĕкĕнмен, шкул директорĕсемпе ял Совет председателĕсен хушамачĕсене асăнман.

«Сĕнтерўшĕн» хаçат критикăна хисеплемест, критикăна сарасси çинчен шухăшламасть. Çав хушăрах район çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленес тĕлĕшпе чăтма çук кая юлса пырать. Ултă шкула тĕплĕн юсама палăртнă, халĕ иккĕшне кăна юсама тытăннă. Ытти шкулсенчен çиччĕшне кăна юсаса çитернĕ. Районти 31 шкултан çиччĕшĕнче вутă пĕр кубометр та çук-ха. Учительсем валли турттарса кăлармалли 1.253 кубометр вутăран 280 кубометрне кăна турттарса кăларнă.

Чурачăк районĕнчи ял Совечĕсенчен нумайăшĕ вĕренў çулне хатĕрленме кирлĕ укçа-тенке уйăрса памаççĕ. Ял Совечĕсен бюджечĕпе шкулсем валли вĕренўре кирлĕ хатĕрсем тата кĕнекесем илме 7.600 тенкĕ расходлама пăхнă пулсан, 199 тенкĕ кăна расходланă.

«Сĕнтерўшĕн» хаçат çак çитменлĕхсене асăрхамасть, вĕсенчен пăрăнса иртсе каять.

Вĕренў çулне пуçланиччен хаçат хăйĕн йăнăшне кăшт та пулин тўрлетме пултарать. Хаçатăн, вĕренў çулне хатĕрленес ĕçри паха тĕслĕхсене çутатса пынипе пĕрлех, çак ĕçри çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклемелле, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăшмалла.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

КЎКЕÇ. Районти Чапаев ячĕпе, Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тăваттшар тонна тимĕр-тăмăр пухса «Главвторчермет» кантурне леçсе пачĕç.

Çавăн пекех Сĕнтĕр районĕнчи 1905-мĕш çулхи революци ячĕпе тăракан, Иш-лей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем 4.800-шер килограмм тимĕр-тăмăр пухса государствăна пачĕç.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕç ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче

Совет Союзĕнче тухакан хаçатсенче пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, июлĕн 31-мĕшĕнче Совет Правительстви Пĕрлешўллĕ Штатсен Правительствине нота ярса панă, унта кăçалхи июлĕн 27-мĕшĕнче Америкăн 4 истребителĕ Совет Союзĕн пассажирсем лартса çўрекен «ИЛ-12» йышши самолечĕ çине Китай Халăх Республикин территорийĕнче вăрă-хурахла тапăннине хирĕç татăклăн протест панă. Самолет тапăннине пула Совет Союзĕн 21 гражданинĕ тата самолет пĕтнĕ пулнă.

Августăн 1-мĕшĕнче США-н Мускаври Посольстви США Правительстви хушнипе çак ыйту тăрăх СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствине ответлă нота ярса панă. Çакна май августăн 11-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ А. А. Громыко США послне Ч. Болен господина йышăннă, ăна çакăн пек нота панă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Правительстви 1953 çулхи августăн 1-мĕшĕнче ярса панă нотăна илни çинчен пĕлтерсе, çапла калама кирлĕ тесе шутлать.

Совет Правительстви июлĕн 31-мĕшĕнче ярса панă нотăра çапла пĕлтернĕччĕ: кăçалхи июлĕн 27-мĕшĕнче Китай Халăх Республикин çĕршывне пырса кĕнĕ Америкăн тăватă истребителĕ вырăнти вăхăтпа 12 сехет те 28 минутра (Мускав вăхăчĕпе 6 сехет те 28 минутра) Порт-Артуртан Владивостока палăртнă çулпа ялан вĕçсе çўрекен «ИЛ-12» йышши пассажирсем лартса çўрекен совет самолечĕ çине Китай территорийĕнче тапăннă, ăна персе ўкернĕ. Совет Союзĕн пассажирсем лартса çўрекен хĕçпăшалсăр самолечĕ çине Америка истребителĕсем Китайпа Корея чиккинчен 110 километртра тăракан вырăнта, Китайри Хуадянь хули районĕнче тапăннă. Çав вырăнта Порт-Артуртан Владивостока ялан вĕçсе çўремелли авиаци линийĕ иртсе пырать, çак çул тăрăх пассажирсем лартса çўрекен совет самолечĕсем темиçе çул хушши вĕçсе çўреççĕ ĕнтĕ. Совет самолечĕ çине Америка истребителĕсем тапăннă вăхăтра унăн координачĕ 43° 5′ çурçĕр широти тата 127° 45′ хĕвелтухăç долготи пулнă.

Америка истребителĕсем совет самолечĕ çине тапăнни тата çакăн пек тапăннипе самолет пĕтни çинчен пĕлтернине илнĕ хыççăн, Хуадянь районне çийĕнчех СССР Граждански Сывлăш флочĕн Главнăй Управленийĕн ятарласа уйăрнă комиссине совет самолечĕ пĕтнипе çыхăнса тăракан ĕçсем мĕнрен килнине тĕрĕслесе тухма кăларса янă. Комисси 15 пассажирăн виллине тата экипаж членĕсен 6 виллине, çавăн пекех çĕмĕрĕлнĕ самолетăн ванчăкĕсене тупнă. Комисси тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартнă: 6 виле çинче пульăсемпе тата осколоксемпе амантнă вырăнсем пур, çĕмĕрĕлнĕ самолета 19 çĕртен пульăсемпе персе шăтарнă. Парашютсем тата самолет çинче пулнă ытти япаласем çинче те пульăсем шăтарса тухнă вырăнсем пур. Комисси, кунсăр пуçне, Америка истребителĕсем Совет Союзĕн пассажирсем лартса çўрекен самолечĕ çине тапăннине курнă вырăнти Китай çыннисенчен ыйтса пĕлнĕ. Вĕсем Совет Правительстви июлĕн 31-мĕшĕнче панă нотăра çырса кăтартнă фактсене пĕтĕмпех çирĕплетнĕ.

США Правительстви кăçалхи августăн 1-мĕшĕнче панă хăйĕн нотинче Америка истребителĕсем июлĕн 27-мĕшĕнче вырăнти вăхăтпа 12 сехет те 25 минутра «ИЛ-12» йышши самолет çине тапăнни-не, тапăннă вăхăт совет нотинче кăтартнă вăхăтпа пĕр пек илсе тухнине йышăнать. Çакăнта кăтартнă пек тапăннипе «ИЛ-12» самолета персе ўкернĕ. Анчах, çав вăхăтрах, США Правительстви Америка истребителĕсем «ИЛ-12» самолет çине Китай территорийĕнче мар, Корея территорийĕнче, Ялуцзян юханшывĕнчен 8 мильăна яхăн вырăнта—координатне шутласан—41° 38′ çурçĕр широти тата 126° 55′ хĕвелтухăç долготи пулнă вырăнта тапăннă пек кăтартма пăхать. Вăл тĕрĕс илсе кăтартнă фактсене пăхмасăр çавăн пек калать. Америка истребителĕсем Совет Союзĕн пассажирсем илсе çўрекен самолечĕ çине тĕрĕссипе илсен, США нотинче кăтартнă вырăнта мар, çўлте илсе кăтартнă пек координатсем 43°5′ çурçĕр широти тата 127° 45′ хĕвелтухăç долготи пулнă вырăнта тапăннă. Çав вырăн вăл нотăра кăтартнă пек Корея территорийĕнче Ялуцзян юханшывĕнчен 8 мильăра мар, Китай территорийĕнче, нотăра кăтартнă вырăнтан çурçĕр-хĕвелтухăçĕнче 170 километртра пулать.

Çапла ĕнтĕ, США Правительствин нотинче Америка истребителĕсем Совет Союзĕн пассажирсем илсе çўрекен самолечĕ çине тапăннă вăхăта тĕрĕс кăтартнă, анчах тапăннă вырăна тĕрĕс мар кăтартнă. Америка истребителĕсем Совет Союзĕн пассажирсем илсе çўрекен самолечĕ çине тапăннă вырăн пирки США Правительствине йăнăш пĕлтернĕ пулмалла.

Çўлте каланисене шута илсе, Совет правительстви июлĕн 31-мĕшĕнче панă нотăра Америка çар самолечĕсем Совет Союзĕн пассажирсем илсе çўрекен хĕçпăшалсăр «ИЛ-12» самолечĕ çине вăрă-хурахла тапăннă пирки татăклăн протестленине тепĕр хут çирĕплетет, çак ĕçшĕн айăплă çынсене хытă наказани пама, çавăн пекех тата Америка çар командованийĕ енчен малашне çакнашкал айăплă ĕçсем ан пулччăр тесе мерăсем йышăнма калать.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Совет правительстви асăннă 21 совет гражданинĕ тата «ИЛ-12» самолет пĕтнĕ май Совет Союзĕ сиен курнăшăн США Правительствин укçа тўлемелли çинчен пĕлтерет. Мĕн чухлĕ сиен курнине çак нота çумне Хушса çырнинче кăтартса панă».

А. А. Громыко çавăн пекех тата Ч. Болен господина нота çумне Хушса çырнине панă. Унта совет гражданĕсем тата самолет пĕтнĕ май Совет Союзĕ тўснĕ сиеншĕн мĕн чухлĕ компенсаци тўлемеллине кăтартса панă. Пĕтĕмпе США-н Совет Союзне 7.445.800 тенкĕ е 1.861.450 доллар тўлемелле. Ку шута çак тăкаксем кĕреççĕ:

вилнĕ пассажирсемпе самолет экипажĕн членĕсен çемьисене пĕр вăхăтлăха пособи пама—420.000 тенкĕ;

вилнисен çул тултарман ачисемпе ватă ашшĕ-амăшĕсене пенси тўлесе тăма — 5.670.000 тенкĕ;

вилнĕ çынсене пытарассипе тата вĕсен ўчĕсене турттарса каяссипе çыхăнса тăракан расходсем—315.000 тенкĕ;

вилнĕ çынсен пурлăхĕ пĕтнĕшĕн — 84.000 тенкĕ;

«ИЛ-12» самолет хакĕ 956.800 тенкĕ.

Ч. Болен господин асăннă нотăна хăйĕн Правительствине ярса парасси çинчен пĕлтернĕ.

Контроль правипе усă курасси çинчен

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци опытĕнчен

Ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе тăракан тĕп задачăсене пурнăçлас ĕçре колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пуçламăш парторганизацисен коммунистсен авангардлă рольне вăйлатса, вĕсен ответлăхне ўстерсе пымалла. Кашни коммунист хăйĕн партипе государство умĕнчи тивĕçне яланах асра тытса ĕçлетĕр, хăйĕн примерĕпе партире тăман массăсене хавхалантарса пытăр.

Ку тĕлĕшпе пирĕн республикăри Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пысăк опыт пухрĕ. Парторганизаципе унти коммунистсем КПСС Уставне тĕплĕн пурнăçласа пыма тăрăшаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз «КИМ» колхозпа пĕрлешрĕ. Çапла вара ку колхозсенчи парторганизацисем те пĕрлешсе пысăкланчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци халĕ 45 коммуниста пĕрлештерсе тăрать. Парторганизацие ертсе пыма 9 çынтан бюро тунă. Бюро членĕсем ĕçĕн уйрăм участокĕсемшĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Парторганизацири коммунистсенчен 38 çын колхоз производствине тўрремĕнех хутшăнса ĕçлет. Вĕсене пурне те ответлă участоксене уйăрса лартнă. Коммунистсем пурте обществăлла хуçалăха çирĕплетессишĕн пыракан кĕрешўре партире тăман колхозниксемпе колхозницăсене лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кăна, сăмахран, çакăн пек тĕслĕхпе те çирĕплетсе пама пулать. Иртнĕ çулта кашни ĕçлеме пултаракан колхозник вăтамран 270 ĕçкунĕ тунă. Çав хушăрах рядовой колхозник пулса ĕçлекен коммунистсем 330-тан пуçласа 492 ĕçкунĕ таран тунă.

Коммунистсем обществăлла-политикăлла ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ, ĕçсыннисене партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса парас тата вĕсене пурнăçласа пыма колхозниксен массисене мобилизацилес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Коммунистсен производствăра малта пырас политикăлла рольне ўстерни, колхозри мĕнпур участоксенчи ĕçсене тĕплĕн пĕлсе тăни парторганизацие партире тăман массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме пулăшать, правлени ĕçне лайăхрах тĕрĕслесе тăма май парать. Çапла вара пуçламăш парторганизаци правление колхоз ĕçне, бригадăсемпе фермăсен тата участоксен ĕçĕсене тĕрĕс ертсе пыма пулăшать.

Правлени ĕçне тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе парторганизаци тĕрлĕ майсемпе усă курать. Парти пухăвĕсемпе бюро ларăвĕсенче ертсе пыракан работниксен — правлени председателĕн, бригадирсен, ферма заведующийĕсен тата ытти работниксен отчечĕсене итлеççĕ. Кун пек пухусенче тата бюро ларăвĕсенче партире тăман активистсем те пулаççĕ.

Правлени ĕçĕсем çинчен хатĕрлекен отчетсене, производство планĕсене тата приходпа расход сметисене колхозниксен пухăвĕсенче сўтсе явма лартиччен малтан парти пухăвĕсенче пăхса тухаççĕ. Коммунистсем ун пек ыйтусене активлăн сўтсе яваççĕ, ĕç çине критикăллăн пăхаççĕ, çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтермелли майсене тĕплĕн кăтартса параççĕ. Парторганизаци палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнать.

Правленине ытти ответлă работниксен отчечĕсене итлесси—пысăк та кирлĕ ĕç. Анчах та контроль правипе усă курас теши çакна кăна пĕлтермест. Парторганизаци бюровĕ правлени ĕçне тĕрĕслес тĕлĕшпе мĕнпур коммунистсен активлăхне ўстерсе пырать. Бюро коммунистсене бригадăсенчи, фермăсенчи тата ытти участоксенчи ĕçе тĕрĕслеме поручнисем парать. Çакăн пек ĕçсене парторганизаци партире тăман актива та хутшăнтарать. Партбюро уйрăм участоксенчи ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслес ĕçе парти пухăвĕсемпе бюро ларăвĕсем пулас умĕн кăна мар, куллен-кун, тăтăшах туса пырать.

Сăмахран, парти членĕ колхозница Н. Васильева юлташ пĕрремĕш уй-хир бригадинче çакăн пек тĕрĕслўсем туса ирттернĕ: кăçалхи январь уйăхĕнче — минеральнăй удобренисене мĕнле майпа сыхласа усранине, апрельте — лашасене мĕнле пăхнине, май уйăхĕнче — кун йĕркине мĕнле тытса пынине, июньре — лаша витисенче тасалăх правилисене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕсленĕ.

Рядовой колхозник Емельянов юлташ иккĕмĕш уй-хир бригадинче ялхуçалăх машинисене мĕнле усранине икĕ хутчен тĕрĕсленĕ. Библиотекарь В. Портнов, агроном Е. Васильева, рядовой колхозник М. Сапожников юлташсем уй-хир тата пахча çимĕç бригадисенчи колхозниксем ĕçе мĕнле хутшăннине тĕрĕслесе ирттернĕ.

Партбюро пĕр-пĕр участокри ĕçе тĕрĕслеме ытти çĕрте ĕçлекенсене ытларах хутшăнтарать. Сăмахран, 5-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ В. Дергунов юлташ сысна фермине ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслў итогĕсене партбюро хăйĕн ларăвĕнче сўтсе явнă. Кун пек тĕслĕхсем ытти çĕрте те пур. Сысна фермин заведующийĕ Н. Иванов юлташ иккĕмĕш уй-хир бригадинче лаша хатĕрĕсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕсленĕ. Пушара хирĕç кĕрешекен ирĕклĕ общество начальникĕ Самаков юлташ бригадăсенче тислĕк, кĕл мĕнле усранине тата лартнă йывăçсене мĕнле сыхланине тĕрĕсленĕ.

Тĕрĕслесе тупнă çитменлĕхсем çинчен парторганизаци правлениe пĕлтерет. Анчах парторганизаци правлени умне ыйту лартнипех ĕçе вĕçлемест, палăртнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене правлени мĕнле майпа пĕтерсе пынине тĕрĕслесе тăрать, çитменлĕхсене пĕтерттерет.

Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисен руководителĕсем коммунистсене поручнисем тупса параймасăр «аптăраса тăраççĕ», агитацилле-массăлла ĕç тума, боевой листоксемпе хаçатсем кăларма кăна поручнисем параççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизацире кун пек мар. Парторганизаци кашни коммуниста поручени парать, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрать.

Коммунистсен активлăхĕпе производствăра малта пырас ролĕ вăйланнă май парторганизацин ĕçсыннисем хушшинчи авторитечĕ те ўссе пырать. Пуçламăш парторганизаци мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшать. Çавăнпа та ĕнтĕ ăна колхозниксен масси чăннипех хисеплет. Колхозниксем партбюропа пысăк çыхăну тытаççĕ, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа параççĕ, çитменлĕхсем çинчен пĕлтереççĕ, йăнăшсемпе çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен каласа параççĕ. Çакă вара партбюрона тĕрĕслў ĕçне тата ытларах вăйлатма пулăшать.

Колхозница Ягудина юлташ Иванов счетовод хăйне хăй мăн кăмăллăн тыткалани çинчен партбюрона пĕлтернĕ. Иванов юлташ ĕçпе пыракан çынсемпе хирĕçкеленĕ, Ягудина юлташа кирлĕ справкăна памасăр тăнă. Партбюро Иванов юлташăн çитменлĕхĕсем çинчен правлени ларăвĕнче сўтсе явма сĕнў панă. Правлени Иванов юлташа çитменлĕхсем тунăшăн хытă асăрхаттарнă, ĕçе лайăхлатма хушнă. Партбюро кун хыççăн вара правлени решенийĕ мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслесе тăнă.

Смирновăпа Демидова колхозницăсен лайăх ĕçленĕшĕн хушса тўлемелли йĕрке тăрăх тырпул илмелле пулнă. Анчах та правленири хăшпĕр работниксем вĕсене памасăр тăнă. Смирновăпа Демидова юлташсем çак йĕркесĕрлĕх çинчен партбюрона пĕлтернĕ. Кун пирки те правлени тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

Тепĕр тĕслĕх илер. Колхозри почтальон Иванова юлташ хăйĕн ĕçне кирлĕ пек туса пыман пулнă. Вăл колхозниксене вăхăтра хаçат-журнал леçсе паман. Колхозник Селиванов юлташ çакăн çинчен партбюрона пĕлтернĕ. Партбюро çийĕнчех Иванова почтальон çинчен правлени умне ыйту тăратнă. Правлени Иванова юлташа ĕçрен хăтарнă, ун вырăнне урăх, пултарулла колхозника уйăрнă. Партбюро Сорокин колхозник ыйтăвне те тивĕçтернĕ.

Артель членĕсем партбюрона тĕрлĕ ыйтусемпе пыраççĕ. Вĕсем радио, бригадăсенчи хĕрлĕ кĕтес ĕçне лайăхлатмалли майсем çинчен каласа параççĕ, политикăлла ыйтусемпе интересленеççĕ, правлени ĕçне лайăхлатса пымалли майсене палăртаççĕ. Массăсемпе тачă çыхăну тытни парторганизацие мĕнпур ĕçе лайăх пĕлсе тăма, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма пулăшать.

Правлени—колхозниксен масси суйласа лартнă исполнительнăй орган. Вăл артель членĕсем умĕнче мĕнпур ĕçшĕн ответ тытать. Правленин ертсе пырас рольне тăтăшах ўстермелле. Колхозри парторганизаци кулленхи ĕçсене хăй тĕллĕн мар, правлени урлă туса пыма тăрăшать, унăн авторитетне ўстерсе пырать.

Пуçламăш парторганизаци хăйĕн ĕçĕсене ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсене пурнăçлас тĕллевпе тăвать, ку тĕлĕшпе правление пысăк пулăшу парать.

Правление Социализмла Ĕç Геройĕ В. В. Зайцев юлташ председатель пулса ертсе пырать. Вăл парторганизаци паракан пулăшупа пĕлсе усă курать. Председатель ертсе пырас ĕçе пĕччен мар, правлени членĕсемпе тачă çыхăнса тăвать. Правлени 9 çынтан тăрать. Вĕсенчен тăваттăшĕ—коммунистсем. Правлени членĕсене уйрăм ĕçсем валеçсе тухнă. Сăмахран, председатель пĕтĕм ĕçсене ертсе пырать. Правлени членĕ П. Сорокин юлташ хушма хуçалăхсемшĕн ответлă, З. Царев юлташ—тырпул культурисене пăхас енĕпе, А. Петрова юлташ—техникăлла культурăсем енĕпе, Е. Мясников юлташ — складсенчи пурлăха упрас енĕпе, Железов юлташ—обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе, Гермаков юлташ—колхозниксен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас енĕпе ответлă пулса тăраççĕ.

Пуçламăш парторганизаципе правлени колхоза коллективлăн ертсе пыраççĕ, шалти демократи йĕркине пăхăнса ĕçлеççĕ. Колхозра пĕрлехи пухусемпе правлени ларăвĕсене вăхăтра ирттереççĕ. Парторганизаци пуçарнипе производствăлла канашлусем те тăтăшах пулаççĕ. Производствăлла канашлусенче актив йышлă пулать. Унта иртнĕ вăхăтри итогсене пăхса тухаççĕ, çитес тапхăрти ĕçсене тата вĕсене пурнăçламалли майсене палăртаççĕ.

Парторганизаци колхоз ĕçне активлă хутшăнни, контроль правипе туллин усă курни артеле хуçалăхпа организаци енчен тĕреклеме пулăшать. Колхоз çултан-çул пысăк ўсĕмсем тăвать, тырпула выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ўстерет.

Иртнĕ çулта Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 20,5 центнер тырпул пухса кĕртнĕ. Коммунист А. Михайловский юлташ ертсе пыракан бригада гектар пуçне 26-шар центнер тулă, 28-шар центнер сĕлĕ туса илнĕ. Ытти тырпулсен тухăçлăхĕ те пысăк. Колхоз çураки ĕçĕсене кĕске срокрах тата пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Артель членĕсем кăçал тата вăйлăрах тырпул ўстерчĕç, халĕ вĕсем тырпула тирпейлĕн пухса кĕртеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ куллен ўссе пырать.

Колхоз тырпулпа выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта артель 1.781.370 тенкĕ тупăш илнĕ. Колхозри пайланман фонд 3 миллион тенкĕрен иртет. Строительство ĕçĕ вăйланнăçемĕн вăйланать, машинăсен паркĕ ўсет. Колхоз ГЭС, 8 автомашина тытать. Радиоузел тунă. Кăçал кунта çĕнĕрен сысна вити, силос хывмалли башня тăваççĕ, 175 пуç вырнаçмалăх ĕне вити туса пĕтереççĕ. Ĕне витине водопровод кĕртеççĕ, выльăхсене шăварма автомат тăваççĕ. Артель членĕсем тулăх та культурăллă пурăнаççĕ.

Çак ўсĕмсене тăвас ĕçре колхозри парторганизаци хăйĕн рольне аван палăртса пычĕ. КПСС Уставĕ хушнисене пурнăçласа, пуçламăш парторганизаци коммунистсен ĕçри ответлăхĕпе кĕрешўри пултарулăхне ўстерсе пырать, артель хуçалăхне малалла тĕреклетсе пырассишĕн кĕрешет, политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатать.

Г. ТЕРНОВСКИЙ,
КПСС обкомĕн инструкторĕ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗнче

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМПЕ ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМ 1953 ҪУЛХИ II-МӖШ КВАРТАЛТА СОЦИАЛИЗМЛА ӐМӐРТСА ӖҪЛЕНИН ИТОГӖСЕМ ҪИНЧЕН

Промысла кооперацийӗпе инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем 1953 ҫулхи иккӗмӗш кварталта социализмла ӑмӑртса ӗҫленин итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫапла йышӑннӑ:

ПРОМКООПЕРАЦИ АРТЕЛӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Шупашкарти «Культура» артельне памалла тунӑ (правлени председателӗ Моисеев юлташ). Артель иккӗмӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана 140,4 процент тата ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх тултарнӑ, накоплени тумалли плана 32 пин тенкӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 16,6 процент ирттерсе тултарнӑ, социализмла ӑмӑртӑвӑн ытти условийӗсене те пурнӑҫланӑ.

Шупашкарти «Победа», «Кожупряжь» артелӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ВӐРМАН ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Шупашкарти Куйбышев ячӗпе тӑракан вӑрман промысла артельне памалла тунӑ (правлени председателӗн ӗҫӗсене туса пыракане Ефремов юлташ). Артель иккӗмӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана 152,9 процент тата ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх тултарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 19,4 процент, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 33,3 процент тата ваккӑн суту-илӳ тумалли плана 5,3 процент ирттерсе тултарнӑ, социализмла ӑмӑртӑвӑн ытти условийӗсене те пурнӑҫланӑ.

Канашри «1-ое Мая», Шупашкар районӗнчи «XXIII годовщина Октября» артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙӖН АРТЕЛӖСЕМ ЕНӖПЕ

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне инвалидсен Вӑрнарти «Трудовик» артелӗнчех хӑвармалла тунӑ (правлени председателӗ Цветков юлташ). Артель иккӗмӗш кварталта продукци туса кӑлармалли плана 137 процент тата ҫирӗплетнӗ ассортимент тӑрӑх тултарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 2,7 процент, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 10 процент ирттерсе тултарнӑ, социализмла ӑмӑртӑвӑн ытти условийӗсене те пурнӑҫланӑ.

Инвалидсен Шупашкарти «Волга» артелӗ лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Вӑрнарти зооветтехникумра

ВӐРНАР. Зооветтехникумран вӗренсе тухакансем ҫак кунсенче государство экзаменӗсем тытса пӗтерчӗҫ. Нумай студентсем лайӑх паллӑсем илнӗ. Альберт Якушев комсомолец техникумран пур предметсемпе те «отлично» паллӑсем илсе вӗренсе тухнӑ.

Техникумӑн зоотехника тата ветеринари уйрӑмӗсенчен кӑҫал 48 ҫын вӗренсе тухнӑ. Ҫамрӑк специалистсем Урала тата Чӑваш, Тутар республикисене ӗҫлеме каяҫҫӗ.

Зооветтехникума кӑҫал ҫӗнӗрен 60 ҫын вӗренме илмелле. Техникума вӗренме илме ыйтса, Чӑваш, Мордва республикисенчен тата Горький облаҫӗнчен 620 ҫын заявлени панӑ.

Халӗ техникума вӗренме кӗмелли экзаменсем пыраҫҫӗ.

П. ТИХОНОВ.

Государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарса, Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне тата ытларах ҫирӗплетер!

* * *

Виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗ

Колхозсемпе МТС-сем ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне августӑн 10-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ (процентпа)

	Мордва АССР-ӗ	Мари АССР-ӗ	Чӑваш АССР-ӗ
Кӗрхи тырӑсем тата ҫуртрисем пухса кӗртнӗ	42,1	47,1	53,5
Вӑл шутран комбайнсемпе	31,5	28,3	29,5
Капана хывнӑ	60,2	23,3	46,7
Ӑвӑн ҫапнӑ	67,2	36,2	30,4
Йӗтӗн татнӑ	—	33,9	11,1
Вӑрлӑхлӑх хӑварнӑ нумай ҫул ӳсекен курӑксем ҫулса пухнӑ	10,5	4,5	11,8
Силослӑх культурӑсене ҫулса пухнӑ	46,9	15,0	67,8
Силос хывнӑ	45,4	37,3	39,7
Утӑ хатӗрленӗ	—	69,7	83,5
Тракторсемпе тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне тултарнӑ	56,6	56,5	55,3
Кӗрхи тырӑсем акнӑ	—	29,8	3,9
Государствӑна тырӑ памалли 1953 ҫулхи плана тултарнӑ	1-мӗш вырӑн	2-мӗш вырӑн	3-мӗш вырӑн

Пӗрремӗш тивӗҫе срокчен пурнӑҫларӑмӑр

Пирӗн колхоз членӗсем пур ӗҫе те вӑхӑтра тата тӗплӗ тӑваҫҫӗ. Уйрӑмах вӗсем тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте питӗ типтерлӗ ӗҫлеҫҫӗ, кашни пӗрчӗ тырра пухса кӗртме тӑрӑшаҫҫӗ.

Колхозӑн кӑҫал 325 гектар кӗрхи тырӑсем пухса кӗртмелле. Ҫак тырпула хӑвӑртрах пухса кӗртме мӗн кирлине эпир йӑлтах турӑмӑр. Уйрӑмах МТС машинисемпе тата хамӑр колхозри машинӑсемпе лайӑх усӑ куратпӑр. В. Токсубаевпа А. Шмелев механизаторсем самоходнӑй комбайнсемпе 200 гектар ытла ыраш тата кӗрхи тулӑ вырчӗҫ. Колхозниксемпе механизаторсем хастарлӑ ӗҫленипе ыраша планпа пӑхниччен маларах вырса пӗтертӗмӗр. Вырнӑ тырпула пӗтӗмпех капана хывнӑ.

Колхозниксем халӗ пӑрҫа ҫулаҫҫӗ, йӗтӗн татаҫҫӗ, комбайнерсем—юлашки участоксем ҫинчи кӗрхи тулӑна выраҫҫӗ.

Колхоз ӗҫченӗсен пирвайхи тивӗҫӗ — государствӑна тырӑ вӑхӑтра парса татасси. Эпир тырӑ вырма тухсанах хатӗрлев пунктне татти-сыпписӗр тырӑ ӑсатма тытӑнтӑмӑр. Колхозниксемпе механизаторсем пысӑк ҫӗнтерӳ турӗҫ; августӑн 5-мӗшӗнче Тӑван ҫӗршыв умӗнчи пӗрремӗш тивӗҫе пурнӑҫларӑмӑр. Обязательнӑй поставка йӗркипе тата МТС ӗҫленӗшӗн государствӑна пӗтӗмпе 8.925 пӑт тырӑ (ыраш тата тулӑ) патӑмӑр.

Халӗ эпир, ҫуртрисене пухса кӗртнипе пӗр вӑхӑтрах, кӗрхи тырӑсене агротехникӑлла чи лайӑх вӑхӑтра акса хӑварма, кӑҫалхи ҫӗнӗ строительство планне срокчен пурнӑҫлама, йышлӑ выльӑх-чӗрлӗх валли апат нумай хатӗрлеме тӑрӑшатпӑр.

М. КНЯЗЬКОВ, — Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз.

Талӑкра виҫӗ рейс

Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна тырӑ парас ӗҫре районта чи малта пыракан колхоз шутланать.

Ку ӗҫре уйрӑмах колхозри шофер Меркурий Григорьев паллӑ вырӑн йышӑнать. Вӑл кӑҫал тырпул хатӗрлевӗ пуҫланнӑранпа ГАЗ-51 автомашинӑпа Шупашкара 35 рейс турӗ. Юлашки кунсенче вӑл тырӑпа «Заготзерно» пунктне талӑкра виҫшер хут тухнӑ. Ӑна ҫак сезонта 120 тонна тырӑ турттарма задани панӑ пулсан, вӑл 80 тонна яхӑн турттарнӑ та ӗнтӗ.

Григорьев юлташпа колхозри шофер Василий Данилов ӑмӑртать, вӑл та талӑкра виҫӗ рейс тӑвать, правлени панӑ задание тултарас енӗпе хӑйӗн юлташне хӑваласа ҫитрӗ.

Григорьев юлташӑн ӗҫри ӑнӑҫлӑхӗ— унӑн машини ҫинче яланлӑха уйӑрнӑ грузчиксем хастарлӑ ӗҫлениччен тата колхоз государствӑна пама тырӑ ҫителӗклӗ ҫапса хатӗрлениччен килет. Машинӑсем ахаль тӑмаҫҫӗ, тырра хатӗрлев пунктне ҫанталӑк мӗнле тӑнине пӑхмасӑр ҫӗрӗн-кунӗн турттараҫҫӗ.

— Тырпул хатӗрлемелли плана срокчен тултарасси пирӗнтен, шоферсенчен, нумай килет,—тет Григорьев юлташ.— Хамӑн нормӑна август уйӑхӗ вӗҫлениччен тултаратӑпах.

Колхозсенчи шоферсен пурин те тырпул хатӗрлемелли плана тултарассишӗн шофер Григорьев коммунист пек кӗрешмелле.

Ст. ИВАНОВ.

КӖРХИ ТЫРА АКАҪҪӖ

ЧУРАЧӐК, августӑн 13-мӗшӗ. (Телефонпа). «Красный восток» колхоз кӗрхи тырӑсем акать. Хирте Н. Николаев юлташ бригадинчи трактористсем тырра икӗ агрегатпа хӗреслӗ майпа акаҫҫӗ.

«Победа», «Память Сталина» тата ытти колхозсем те кӗракине тухрӗҫ, ҫак ӗҫе хӑвӑрт та лайӑх туса ирттерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Районти колхозсем кӑҫал кӗрхи тырӑсем акмалли вырӑна ирхи ҫӗртме вӑхӑтра тунӑ, удобренисем, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 25 пин тонна ытларах кӑларнӑ. Кӗрхи тырӑсене 1.040 гектар ҫине хӗреслӗ майпа акма палӑртнӑ.

(Хамӑр корр.).

Вӑраххӑн выраҫҫӗ

СЕНТЕРВӐРРИ. «Молния» колхозра 360 гектар ыраша 10 кунта вырса пӗтерме палӑртнӑ. Анчах ку тарана ҫитсе 220 гектар кӑна вырнӑ. Ҫуртрисем те 349 гектар ҫинче пулса ҫитрӗҫ. Итем ҫине кӗлте турттарассине япӑх организациленӗ, уйрӑм бригадӑсем витнӗ итемсене, авӑнсене халӗ те тасатса ҫитермен. Государствӑна тырӑ памалли графика тултарса пымаҫҫӗ. Вӑрлӑх хатӗрлесси те вӑраххӑн пырать.

Колхозра машинӑсемпе тырӑ вырассине хакламаҫҫӗ, икӗ юсавлӑ жнейкӑран пӗрине те вырмаҫҫӗ.

МТС колхоза ҫителӗксӗр пулӑшать. Ҫӗнӗ самоходнӑй комбайнпа Н. Иванов комбайнер ӗҫлет. Анчах вӑл ҫаврӑнӑҫусӑр, ҫавна пула комбайнпа тырӑ сахал вырнӑ.

Колхозра тырпул пухса кӗртес ӗҫ ҫулса пыни пуринчен ытла ӗҫ дисциплини япӑхса кайнинчен килет. Хӑшпӗр колхозниксем дисциплинӑна сӗмсӗррӗн пӑсаҫҫӗ, колхоз правленинчен ыйтмасӑрах урӑх ҫӗре ӗҫлеме тухса каяҫҫӗ. Халӗ колхоз хирӗнче тӑрӑшса ӗҫлекен колхозниксем сахал мар, анчах та кунта вӗсен опытне ытти колхозниксем хушшинче сармаҫҫӗ. Нормӑна ирттерсе тултаракан колхозниксен ӗҫне 4-мӗшпе 2-мӗш бригадӑра шута илсе пымаҫҫӗ.

Колхозра политикӑлла-массӑлла ӗҫе пачах организацилемен. Комсомол организацийӗн секретарӗ А. Гойко комсомолецсене хаҫат-журнал вуласа парас ӗҫе явӑҫтарма тӑрӑшмасть.

П. ГЕРАСИМОВ.

„Трактор" колхозра

ЕЛЧӖК. «Трактор» колхоз уй-хирӗнче хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. Ӑнса пулнӑ тырпула кӗске вӑхӑтра тата тӑкаламасӑр пухса кӗртессишӗн кашни колхозник тӑрӑшать. Колхозниксемпе колхозницӑсем нумайӑшӗ кулленхи нормӑна ик-виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

Колхоз хирӗнче ҫамрӑк механизатор Виталий Чернов комсомолец «Коммунар» комбайнпа тырӑ вырать, сменӑри нормӑна вӑл куллен 150 процент тултарса пырать. Комбайн ҫинче Хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Ӑна МТС дирекцийӗ районта малти вырӑна тухнӑшӑн панӑ.

Жнейкӑпа тырӑ выракансен те ӗҫри хастарлӑхӗ пысӑк. Ҫамрӑк машинист П. Александров кашни кун 5 гектар вырӑнне 7—8 гектар тырӑ вырать. Колхоз ыраш вырса пӗтерчӗ, ҫуртри вырма пуҫларӗ. Пӑрҫа ҫапса пӗтернӗ, халӗ хуратул ҫапаҫҫӗ.

Колхоз правленийӗн ҫурчӗ умӗнче Хисеп хӑми ҫакӑнса тӑрать. Унта тырпул пухса кӗртес ӗҫре малта пыракансен хушамачӗсене ҫырса хунӑ. Уй-хирте агитацилле-массӑлла ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Ку тӗлӗшпе пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ В. Ермолаев юлташ, М. Паймин, С. Зайцев коммунистсем аван ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Халӗ колхозри агитаторсем колхозниксене СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн материалӗсемпе паллаштараҫҫӗ.

Колхоз государствӑна тырӑ памалли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. Саландаев шофер кашни кун Пӑва хулинчи хатӗрлев пунктне автомашинӑпа виҫшер рейс тӑвать.

Г. АЛТЫНОВ.

Колхозсенчен пӗлтереҫҫӗ

ЧКАЛОВСКИ. «Гвардеец» колхозри выльӑх апачӗ хатӗрлекен бригада 400 тонна силос хывнӑ. Бригада ҫак ӗҫе малалла туса пырать.

И. ПЫРКИН.

ЧУРАЧӐК. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӗвелҫаврӑнӑшне ҫулса 140 тонна силос хывнӑ. Халӗ ҫак паха апата тӗрлӗрен курӑксенчен хатӗрлеҫҫӗ.

Ф. СЕМЕНОВ.

СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗн ӗҫӗсем ҫинчен тата СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн Г. М. Маленков юлташӑн сӑмахӗ ҫинчен урӑх ҫӗршывсенче мӗн ҫыраҫҫӗ

КИТАЙ ХАЛӐХ РЕСПУБЛИКИ

ПЕКИН, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Китай Халӑх Республикинчи центральнӑй хаҫатсем ӗнер малтанхи страницӑсенче СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн Г. М. Маленков юлташӑн сӑмахне пичетлесе кӑларнӑ. Паян ҫак сӑмаха провинцисенчи хаҫатсенче пичетлесе кӑларнӑ.

ШАНХАЙ, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Шанхай общественноҫӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗнче тухса каланине пысӑк интереспа йышӑнса илнӗ. Шанх[illegible]хӗ ӗнер Совет правительстви п[illegible]сӑмахне Пекинри радио пӗл[illegible]х итленӗ. Шанхайри ра[illegible]исем те Г. М. Маленков сӑмахне параҫҫӗ.

Паян Шанхайра тухакан хаҫатсем малтанхи страницӑсенче шултра саспаллисемпе Г. М. Маленковӑн сӑмахне пичетлесе кӑларнӑ.

«Вэньхуэйбао» хаҫат ҫакна палӑртать: СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ йышӑннӑ Государство бюджечӗ Совет Союзӗ мирлӗ политика тытса пынине кӑтартать. Ҫак бюджета хаҫат «мир бюджечӗ» тет.

ПОЛЬША

ВАРШАВА, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Польша Халӑх Республикин общественноҫӗ ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн 5-мӗш сессийӗнче каланӑ сӑмаха пысӑк витӗмлӗхпе йышӑнса илнӗ.

Польшӑри рабочисен пӗрлешнӗ партийӗн хаҫачӗ «Трибуна люду» «Мир хуралӗнчи хӑват» тесе ят панӑ умстатьяра ҫапла ҫырать:

СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн 5-мӗш сессийӗнче каланӑ сӑмах пӗтӗм тӗнчене хытӑн шухӑшлаттарать. Тӗнчери кучухнехи лару-тӑру условийӗсенче, пӗр енчен, мире юратакан вӑйсем тӗнчери хутшӑнусене ҫӑмӑллатассишӗн пыракан кӗрешӳре ҫитӗнӳсем тунӑ, тепӗр енчен, агресси вӑйӗсем мире хирӗҫ ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ провокацисем туса пынӑ условисенче, Маленков юлташӑн сӑмахӗ вӑрҫӑ вӑйӗсене ҫаврӑлӑхлас тӗлӗшпе ҫӗнӗ пысӑк ӗҫ туни пулса тӑрать. Вӑл тӗнчери хутшӑнусене ҫӑмӑллатмалли ҫула кӑтартса парать, ҫакӑнпа пӗрлех вӑл демократиллӗ лагерь пуҫӗнче пырса мир хуралӗнче тӑракан Советсен аслӑ Ҫӗршывӗн хӑватне ӳссӑн кӑтартса парать.

Совет Союзӗ, тесе ҫырать «Трибуна люду» хаҫат, тӗрлӗ системӑсем пӗр-пӗринпе мирлӗ пурӑнмалли позици ҫинче ҫирӗппӗн тӑрать. Маленков юлташ тепӗр хут кӑтартса панӑ тӑрӑх, мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене, вӑл шутра США-па Совет Союзӗ хушшинчи тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа, интересленекен ҫӗршывсем пӗр-пӗринпе каласса татӑлнӑ тӑрӑх татса пама пулать.

Пирӗн халӑх, ытти халӑхсем пекех, Европӑри мир интересӗсемшӗн, Германипе кӳршӗллӗ ҫӗршывсен тата пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн интересӗсемшӗн Германи ыйтӑвне мирлӗ майпа татса парассине пысӑк вырӑна хурать.

ЧЕХОСЛОВАКИ

ПРАГА, августӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Чехословаки халӑхӗ СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн 5-мӗш сессийӗнче тухса каланипе питӗ интересленет.

ПРАГА, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). «Руде право», «Обрана лиду», «Млада фронта», «Свободне слово», «Лидова демокрацие» хаҫатсем Г. М. Маленков сӑмахӗ пирки умстатьясем пичетлесе кӑларнӑ, вӗсем Совет правительствин ӗҫӗсен программине ырлаҫҫӗ.

«Пирӗн халӑх,—тесе ҫырать Руде право» хаҫат,—Совет Союзӗн ӗҫӗсенче мир ӗҫне тӗреклетме тӑрӑшнине кӑна мар курать. Совет ҫыннисен телейлӗ пурнӑҫӗнче вӑл хӑйӗн телейлӗ малашлӑхӗн тӗслӗхне курать. Ҫакна тӗллев патне ҫитмелли паха хатӗрсенчен пӗрин вырӑнне хурса, пирӗн халӑх совет халӑхӗпе, хӑватлӑ Совет Союзӗпе тытакан тӑванла ҫирӗп туслӑха сыхласа тата ҫивӗччӗн хӳтӗлесе тӑрать».

РУМЫНИ

БУХАРЕСТ, августӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Бухарестра тухса тӑракан пур хаҫатсем те СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн 5-мӗш сессийӗнче каланӑ сӑмаха пичетлесе кӑларнӑ.

БУХАРЕСТ, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Бухарестра паян тухнӑ хаҫатсем пурте хӑйсен умстатьисене СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн ӗҫӗсем ҫинчен тата ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков каланӑ сӑмах ҫинчен ҫыраҫҫӗ. «Скынтейя» хаҫат «Совет Союзӗн мирлӗ аслӑ тӗллевӗсем» ятлӑ умстатьяра ҫапла ҫырать:

СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ совет халӑхӗшӗн те, мирлӗ пурнӑҫа юратакан ытти пӗтӗм халӑхсемшӗн те, паллӑ событи пулса тӑрать, мӗншӗн тесен унта ӗҫтсе явнӑ ыйтусем, докладсем тата сесси решенийӗсем пӗтӗм тӗнчипе уйрӑмах пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫсем пулса тӑраҫҫӗ.

«Скынтейя» хаҫат Г. М. Маленков юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче тӗнчери лару-тӑрӑва тарӑн анализ тунине палӑртать. Совет правительстви Корейӑри халӑх хуҫалӑхне юсама миллиард тенкӗ уйӑрса памалла тунине, тесе ҫырать хаҫат, пӗтӗм этемлӗх чӗререн ырласа йышӑнчӗ. Халӑх демократи ҫӗршывӗсем, вӑл шутра пирӗн ҫӗршыв та, тесе ҫырать хаҫат, Корея халӑхне тӑванла пулӑшу пама хатӗр тӑнине кӑтартса пачӗҫ.

БОЛГАРИ

СОФИЯ, августӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн юлашки ларӑвӗнче каланӑ сӑмах Болгари халӑхне питӗ хытӑн интереслентерни ҫинчен пӗлтерет.

Болгарири пиншер ӗҫҫыннисем Г. М. Маленков сӑмахне совет радиостанцийӗсем панӑ чухне итленӗ.

СОФИЯ, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарире тухса тӑракан хаҫатсем паян пурте СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗнче каланӑ сӑмаха пичетлесе кӑларнӑ. «Работническо дело» хаҫат Верховнӑй Совет сессийӗнче Г. М. Маленков юлташ каланӑ сӑмах ҫинчен умстатья пичетлесе кӑларнӑ.

Хаҫат СССР экономика енӗпе ӑнӑҫлӑн аталанса пыни пӗтӗм тӗнчипе историллӗ пысӑк ӗҫ пулса тӑнине палӑртать. Совет Союзӗпе экономика тӗлӗшӗнчен ҫыхӑнса тӑни, тесе ҫырать хаҫат, халӑх демократи государствисен экономикӑлла пултарулӑхне чылай ӳстерет, ҫавӑн пекех тата мӗнпур демократиллӗ лагерьте халӑхӑн пурнӑҫ шайне тӑтӑш лайӑхлатмалли политикӑна пысӑкрах хӑвӑртлӑхсемпе пурнӑҫа кӗртме май парать.

МОНГОЛИ ХАЛӐХ РЕСПУБЛИКИ

УЛАН-БАТОР, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). «Унэн» хаҫат СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн 5-мӗш сессийӗнче каланӑ сӑмаха пичетлесе кӑларнӑ. Г. М. Маленков сӑмахӗ ҫинчен ҫырнӑ умстатьяра хаҫат ҫак сӑмахра тӗнчери лару-тӑрӑва анализ тунин пӗлтерӗшне палӑртать.

Монголи республикинчи ӗҫҫыннисем, тесе ҫырать» «Унэн» хаҫат, Совет Союзӗ тунӑ ҫитӗнӳсемпе хавхаланса тата унӑн историллӗ опычӗпе хӗҫпӑшалланса, хӑйсен ҫӗршывӗнче социализм тӑвас задачӑна ҫӗнӗ хӑватпа пурнӑҫласа пырӗҫ.

ВЕНГРИ

БУДАПЕШТ, августӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Венгрире тухса тӑракан хаҫатсем ӗнер СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн Г. М. Маленков юлташӑн сӑмахне пичетлесе кӑларнӑ.

«Сабад неп» хаҫат паян хӑйӗн умстатьинче ҫапла ҫырать:

Верховнӑй Советӑн пиллӗкмӗш сессийӗ Совет ҫӗршывӗн вӑй-хӑватне совет халӑхӗ хӑйӗн аслӑ партийӗ—нумай нацилӗ Совет государствин гранит пек ҫирӗп тӗрекӗ тавра—таччӑн пӗтӗҫсе тӑнине кӑтартса пачӗ. Тӗнчери халӑхсем тепӗр хут ҫакна курса ӗненчӗҫ: Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн совет халӑхне ертсе пыракан ҫул, Европӑпа Азири халӑх демократи ҫӗршывӗсем суйласа илнӗ ҫул, вӑл ӗҫҫыннисен материальнӑй пурнӑҫне лайӑхлатмалли тата культурӑллӑ шайне ӳстермелли ҫул пулса тӑрать. Тӗнчери халӑхсем тепӗр хут ҫакна курса ӗненме пултарчӗҫ: мире хӳтӗлес ӗҫре Совет Союзӗ хӑватлӑ та шанчӑклӑ ҫӗршыв пулса тӑрать.

Совет Союзӗ, тесе кӑтартса парать малалла «Сабад неп», хӑйӗн коммунизм тумалли шалти политикипе ҫураҫуллӑн хӑйӗн тулашри мир политикине ҫирӗппӗн тытса пырать. Ҫак политикӑна демократипе социализм лагерӗ кӑна мар тата ытти ҫӗршывсенчи ҫӗршер миллион ҫынсем хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ.

Совет Союзӗн правительстви, тесе ҫырать малалла хаҫат, хальхи вӑхӑтра интересленекен ҫӗршывсем пӗр-пӗринпе каласса татӑлнӑ тӑрӑх татса памалла мар тавлашуллӑ ыйтусем е татса паман ыйтусем ҫук тесе шутлакан позици ҫинче ҫирӗппӗн тӑрать.

ДЕМОКРАТИЛЛӖ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, августӑн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Берлинри демократиллӗ хаҫатсем АДН агентстви СССР Верховнӑй Совечӗн ларӑвӗ ҫинчен пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Унта ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ каланӑ сӑмах ҫинчен ҫырнӑ. «Нейес Дейчланд» хаҫат агентство пӗлтернине ҫакӑн пек заголовокпа пичетлесе кӑларнӑ: «Мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа татса пама пулать».

«Нейес Дейчланд» хаҫат паян Маленков юлташӑн сӑмахне пичетлесе кӑларнӑ. Г. М. Маленков юлташӑн сӑмахне пичетленӗ май хаҫат ҫапла ҫырать: «Маленков сӑмахне пӗтӗм Германире мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене, вӑл шутра Германи ыйтӑвне те, мирлӗн татса памалли ҫул ҫинче малалла тунӑ утӑм пулать, тесе шутлаҫҫӗ».

Германири либералла-демократсен партийӗн центральнӑй органӗ «Дер морген» хаҫат редакци ҫырнӑ статьяра ҫакна палӑртать: Г. М. Маленков сӑмахӗнче каласусем ирттермелли ҫула тата тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене, чи малтан Германи ыйтӑвне, татса пама аслӑ державӑсен канашлӑвне пухмалли ҫула кӑтартса панӑ.

Тӗнчери лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатассишӗн тата тӗнчери мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа татса парассишӗн кӗрешесси—Совет Союзӗн тулашри политикин тӗп принципӗ пулнӑ тата халӗ те ҫавӑн пекех пулса юлать, тесе ҫырать хаҫат.

(Малалли 4-мӗш страницӑра).

Учительсем чӗлхе ҫинчен

Чӑваш чӗлхинчи падежсем пирки

Кӑҫалхи июнӗн 28-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра А. Иванов юлташӑн «Чӑваш чӗлхине тӗпчесе вӗренес ӗҫри хӑшпӗр ҫитменлӗхсем ҫинчен» ятлӑ статьи пичетленсе тухрӗ. Статьяна сӳтсе явас майпа пичетленӗ.

Калас пулать: ҫак ыйтӑва пӑхса тухни хальхи вӑхӑтра питӗ вырӑнлӑ. А. Иванов юлташ хускатнӑ ыйту пирки чӗлхе тӗпчевҫисем те, шкулта вӗрентекен учительсем те хӑйсен шухӑшӗсене каламаллах. Ку статья пирки С. Угандеев юлташ ҫырса кӑларчӗ ӗнтӗ.

Иванов юлташ хӑйӗн статьинче чӑваш чӗлхинче тӑву падежӗ ҫукки ҫинчен ҫырать. Кун пирки вӑл иртнӗ ҫулхи «Тӑван Атӑл» альманахӑн 4(45) номерӗнче «Чӑваш чӗлхи стилистикин хӑшпӗр ыйтӑвӗсем» ятлӑ статьинче те ҫырнӑччӗ (115 стр.). Анчах вӑл статьясенче эпир тӑву падежӗ ҫуккине курмастпӑр, тӑву падежӗ пару падежӗпе пӗрлешсе, пару-тӑву падежӗ пулни ҫинчен вулатпӑр. Ҫапла вара, Иванов юлташ чӑваш чӗлхинче тӑву падежӗ «ҫук» тесе ӗнентерсе пӑхнине хӑех пӑрахӑҫа кӑларать. Чӑваш чӗлхинче тӑву падежӗ «ҫуках» текен те ӑна пӗтерейместь пулсан, вӑл падеж пурах ӗнтӗ.

Кӑҫалхи июлӗн 11-мӗшӗнче тухнӑ «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра С. Угандеев юлташ та «Чӑваш чӗлхине тӗпчесе вӗренес пирки» ятлӑ статьинче чӑваш чӗлхинче тӑву падежӗ пурри ҫинчен тӗслӗхсемпе кӑтартса пачӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, чӑваш чӗлхинче тӑву падежӗ пурри курӑнать. Ҫапах та манӑн пару падежӗпе тӑву падежне пӗрлештерсе, пӗр падеж пару-тӑву падежӗ тунипе килӗшес килет.

Хальхи грамматика учебникӗ тӑрӑх эпир пару падежӗпе тӑву падежне уйӑрса вӗрентетпӗр. Вӑл падежсен аффиксӗсемпе местоименилле ыйтӑвӗсем пӗр пек пулнипе чӑваш чӗлхине вӗрентнӗ чухне тӗрлӗ чӑрмавсем пулаҫҫӗ. Уйрӑмах предложенири сӑмахсене падежсем тӑрӑх уйӑрнӑ чухне чылай пӑтраштарусем пулаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех ят падежӗнчи сӑмахсем, камӑнлӑх падежӗпе тӑву падежӗнчи аффикссӑр сӑмахсем вӗренекен ачасене чылай йывӑрлӑхсем кӳреҫҫӗ. Тӗслӗхрен: «Эпӗ лашана сӗлӗ патӑм» предложенири «сӗлӗ» сӑмаха ят падежӗнче, «лашана» сӑмаха тӑву падежӗнче, хӑюллӑраххисем вара «пару-тӑву падежӗнче», теҫҫӗ.

Ҫаксем вӗсем пӗтӗмпех асӑннӑ падежсен аффиксӗсемпе ыйтӑвӗсем пӗр евӗрлӗ пулнипе пулса пыраҫҫӗ, вӗсем чӑваш чӗлхинчи вӗҫленӗве тӗрӗс кӑтартса паманнинчен килеҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхсем ҫулсеренех пулса иртекен экзаменсенче уйрӑмах уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. Предложенисене грамматикӑлла разбор тунӑ чухне, ҫав падежри сӑмахсене пӑтраштарни пирки чылай вӗренекенсен отметкисене чакарма тивет. Ҫапла вара, асӑннӑ падежсем пирки татӑклӑ сӑмах каламанни учительсене те, вӗренекен ачасене те чылай пӑшӑрхантарать. Ҫавӑнпа та пару падежӗпе тӑву падежне пӗрлештерсе, пару-тӑву падежӗ тӑвассипе, пӗр формӑллӑ сӑмахсене тӗп падеж ҫине ярассипе манӑн килӗшес килет. Ҫапла тусан, чӑваш чӗлхине вӗренес ӗҫре чылай ҫӑмӑллӑхсем кӳме пулать.

С. Угандеев юлташ хӑйӗн статьинче форма енчен пӗрешкел сӑмахсене пурне те тӗп падежри сӑмах тусан, предложени членӗсене уйӑрса илме чӑрмантаракан сӑлтав пуласси ҫинчен асӑрхаттарать. Анчах эпир хальхи грамматика тӑрӑх та пӗр падежри сӑмахах тӗрлӗ член пулнине куратпӑр. Тӗслӗхрен: «Пирӗн тӑрӑшарах вӗренмелле» предложенире «пирӗн» сӑмах камӑнлӑх падежӗнче тӑрса дополнени пулать. «Кашнийӗн чӗри вуткӑварлӑ» предложенире «кашнийӗн» сӑмах камӑнлӑх падежӗнче тӑрса определени пулать. Иккӗшин те ыйтӑвӗсем: камӑн? Апла пулсан та, предложени членӗсене уйӑрса илнӗ чухне вӗренекенсем пысӑк чӑрмавсем курмаҫҫӗ, вӗсене пӗлтерӗшӗпе предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ тӑрӑх часах чухласа илеҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех пӗр формӑллӑ сӑмахсене тӗп падежа кӗртсен те, вӗсем мӗнле член пулнине уйӑрса илме йывӑрах пулмасть. Тӗслӗхрен: «Кӑҫал утӑ (подл.) вӑйлӑ пулчӗ». «Ҫулса типӗтнӗ курӑк утӑ пулать (сказ.)». «Колхозниксем утӑ (доп.) ҫулаҫҫӗ». «Утӑ (опред.) ванчӑкне пӗтӗмпех пуҫтарса илмелле». Кӑтартнӑ предложенисенче «утӑ» сӑмах мӗнле член пулнине вӗренекенсем унӑн пӗлтерӗшӗ, предложенири ҫыхӑнӑвӗ тӑрӑх лайӑх уйӑрса илеҫҫӗ.

А. Иванов юлташ учебникре кӑтартнӑ падежсемсӗр пуҫне, тӗллев падежӗпе ҫуклӑх падежӗ тума сӗнет. С. Угандеев юлташ тӗллев падежне кӗртесси ҫинчен анчах ҫырать. Анчах вӑл тӗллев падежӗ вырӑнне пирке падежӗ тӑвасшӑн.

Пирӗн шутпа, ҫак асӑннӑ падежсене пачах кӗртмесен те юрать. Вӑл падежсене кӗртмесен те чӑваш чӗлхине вӗреннӗ чухне нимӗнле йывӑрлӑхсем те пулмаҫҫӗ. Эпир—шӑн (шӗн),—сӑр (сӗр) аффикслӑ сӑмахсене сӑмахпа пӗрлешнӗ хыҫсӑмахсен ушкӑнне вӗреннӗ вӑхӑтра вӗрентетпӗр. Унта эпир шӑн (шӗн) хыҫсӑмахлӑ сӑмахсем мӗншӗн, мӗн тӗллевпе пулни ҫинчен,—сӑр (сӗр) хыҫсӑмахпа пӗрлешнӗ сӑмахсем ҫуклӑха пӗлтернине куратпӑр. Ҫавӑн пекех вӗсем предложенире дополнени пулни ҫинчен те вӗрентетпӗр. Тӗслӗхсем: «Эпӗ уншӑн алӑ пусрӑм», «Шывсӑр никам та пурӑнаймасть» предложенисенче «уншӑн», «шывсӑр» сӑмахсем дополненисем пулаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ,—шӑн (шӗн), —сӑр(сӗр) аффикслӑ сӑмахсене уйрӑм падежсем ҫине уйӑрмасӑрах вӗсем предложенире мӗнле член пулнине пӗр чӑрмавсӑрах уйӑрса илме пулать.

А. Иванов юлташ хӑйӗн статьинче чӑваш чӗлхинче саккӑр падеж тума сӗнет. С. Угандеев юлташ миҫе падеж тӑвасси пирки уҫҫӑн каламасть. Пирӗн шухӑшпа, чӑваш чӗлхинче пурӗ улттӑ падеж пулмалла: тӗп падеж, камӑнлӑх падежӗ, пару-тӑву падежӗ, пӗрлелӗх падежӗ, вырӑн падежӗ, туху падежӗ. Ҫапла туни учительсемпе вӗренекен ачасен ӗҫне чылай ҫӑмӑллатӗ.

В. АНТОНОВ, Чӑваш АССР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗ.

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн ĕçĕсем çинчен тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

(Малалли. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра).

АЛБАНИ

ТИРАНА, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла иртсен Албанири хаçатсем ятарласа кăларнă изданипе тухнă. Хаçатсенче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмаха пичетлесе кăларнă.

Г. М. Маленков сăмахне çавăн пекех тата Тиранăри радио тăрăх та панă.

ТИРАНА, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири хаçатсем паян СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çак сăмаха пĕтĕм тĕнчере пысăк вырăн йышăнса тăракан документ вырăнне хураççĕ.

«Совет çыннисен ĕçĕ—никам сĕнтерейми ĕç» текен умстатьяра «Зери и популлит» хаçат çапла палăртать: Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕнче Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тÿрĕлĕхлĕ те çирĕп политикине пĕтĕм вăйпа уççăн кăтартса панă.

«Бакшими» хаçат хăйĕн умстатьинче: Маленков юлташăн сăмахĕ Совет Союзĕ ялан тытса пыракан мир политикине тепĕр хут çирĕплетсе пани пулса тăрать, тесе çырать. Çак политика вăл тĕнчери хутшăнусене пĕр-пĕринпе тунă килĕшÿсем тăрăх тата пĕр-пĕрне ырă суннă никĕс çинче аталантарса пыма пулăшать.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ПХЕНЬЯН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине центральнăй хаçатсен васкавлă кăларăмĕсем тухнă. Хаçатсем Совет Союзĕ Демократиллĕ Корея Халăх Республикин халăх хуçалăхне юсама тăванла пулăшу пани çинчен çыраççĕ. Хаçатсенче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн 5-мĕш сессийĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикине пĕр миллиард тенкĕ чухлĕ пулăшу парасси çинчен каланă пая пичетлесе кăларнă.

США

НЬЮ-ЙОРК, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Вырсарникун тухнă хаçатсем Маленков юлташ Верховнăй Совет ларăвĕнче каланă сăмах çинчен нумай çыраççĕ, вĕсем уйрăмах США водородлă бомба тĕлĕшпе монополистсем пулма пăрахни çинчен каланă вырăна палăртаççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат Маленков юлташ тулашри политика çинчен каланă пая, çавăн пекех тата хăйĕн Мускаври корреспонденчĕ Солсбери Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен тĕплĕн çырса пĕлтернине пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат та, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат та çакăн пирки редакци çырнă статьясене пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çавăн пекех водородлă бомба çинчен Г. М. Маленков юлташ калани пирки конгресăн уйрăм членĕсемпе официальнăй çынсем мĕн шухăшлани çинчен пĕлтереççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат редакцирен çырнă статьяра, Г. М. Маленков юлташ водородлă бомба туса кăларас тĕлĕшпе США текех монополистсем пулса тăмаççĕ тесе калани çинчен çырса, правительствăна шалти политика енĕпе тата тулашри политика енĕпе те хăйĕн шухăшĕсене кирлĕ пек улăштарма сĕнет. «Атом секретне хамăр пĕр пĕччен тытса тăнă тежен шухăш ытла та нумай вăхăта пычĕ. Çак шухăша пирĕн çĕршыв политикин ертсе пыракан принципĕ вырăнне сыхласа тăни ытла та хăрушă пулнă пулĕччĕ», тесе çырать хаçат.

США-ри хăшпĕр хаçатсемпе политикăлла деятельсем Г. М. Маленков юлташ водородлă бомба çинчен каланипе США çар программине вăйлатма тата хĕçпăшал туса кăларассине малалла вăйлатса пыма кирлĕ сăлтав вырăнне усă курма пăхаççĕ.

«Вашингтон пост» хаçат редакцирен çырнă статьяра çакна палăртать: Г. М. Маленков калани США-на пулма пултаракан икĕ майран пĕрне суйласа илесси умне кăларса тăратнă. Çак майсенчен пĕри вăл, хаçат каланă тăрăх, çар программине йышăнасси пулать. Çар программи США-шăн «нумай миллиард доллара ÿкет», США экономикине «çĕнĕ йывăрлăх кÿрет, ăна халлĕхе тавçăрса илме çук». «Тепĕр майĕ вăл, инçетри май пулсан та,—тесе çырать хаçат,—пур çĕрте те çирĕп инспекци туса пынă условисем тăрăх тĕнчере хĕçпăшалсăрланмалли чăннипех шанчăклă система туса хурасси пулать. Паллах, çак çул вăл, ăна пурнăçлама май килет пулсан, пирĕншĕн усăллă çул пулать. Анчах хĕçпăшалсăрланас тесен, ку таранчченхичен чылай ытларах ырă шухăш пулни кирлĕ. Халиччен Совет Союзĕн шухăшне тивĕçлипе ăнланса илме тăрăшман. Çакна май правительство, тен, государство пуçлăхĕсен канашлăвне организацилессине хирĕç пынине халĕ çĕнĕлле пăхса тухасшăн пулĕ. Ĕçсем, тен, çавăн пек канашлу пухма кирлине тÿрре кăлараççĕ пулĕ, мĕншĕн тесен çавăн пек тунипе килĕшÿ тума мĕнле те пулсан пĕтĕмĕшле никĕс тупма май килĕ».

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри дипломатилле ушкăнсем хушшинче Маленков Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмахра Японие чĕнсе калани çине тимлĕн пăхаççĕ.

Америкăри официальнăй çынсем Маленковăн сăмахне вăл премьер пулса тăнăранпа каланă «чи кирлĕ тĕслĕх вырăнне», Мускав Инçет Хĕвелтухăçĕпе тытакан çыхăнусене лайăхлатма тăрăшнине кăтартакан тĕслĕх вырăнне хурса хаклаççĕ. Маленковăн официальнăй йĕркепе куçарнă сăмахне Вашингтона пĕлтерсен, вăл Инçет Хĕвелтухăç пирки, çавăн пекех тата Японипе Совет çĕршывĕ хушшинче йĕркеллĕ хутшăнусем тума кансĕрленĕшĕн Пĕрлешÿллĕ Штатсене айăпласа каланине питĕ тимлĕн сăнаса вĕренеççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаçатсем Г. М. Маленков каланă сăмах çинчен çаплах редакцирен çырнă статьясене тата хăйсен обозревателĕсен комментарийĕсене пичетлеççĕ.

АНГЛИ

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» тата «Дейли уоркер» хаçатсем Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен тĕплĕн пĕлтернисене пичетлесе кăларнă. Ытти хаçатсем Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен кĕскен çырса пĕлтереççĕ.

Г. М. Маленков юлташ сăмахĕн тулашри политика çинчен каланă пайĕн содержанине Британири радиовещани корпорацийĕ пĕлтернĕ.

Редакцирен çырнă статьяра «Таймс» хаçат Г. М. Маленков Совет Союзĕн политикăлла çул-йĕрне шанчăклăн тĕллесе хунине палăртать. Г. М. Маленков юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен тата Совет Союзĕн тулашри политики çинчен калани пирки чарăнса тăрса, «Таймс» хаçат çапла çырать: «Маленков кирлĕ пек никĕс туса çитерсенех аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттерме тăрăшни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл Германи тĕлĕшпе килĕшÿ тума кăларса тăратнă условисем пысăк вырăн йышăнаççĕ».

«Дейли мейл» тата «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатсем Совет Правительстви экономика енĕпе туса ирттерекен ĕçсем çинче чарăнса тăраççĕ. «Дейли телеграф» Совет правительстви хресченсене налог тĕлĕшĕнчен пысăк çăмăллăхсем панипе хавхалантарса тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерсе апат-çимĕç туса кăларассине вăйлатма тăрăшнине палăртать.

Хаçатсем Г. М. Маленков юлташ водородлă бомба çинчен каланă пирки нумай çыраççĕ.

ЛОНДОН, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Вырсарникун тухакан «Обсервер», «Санди таймс» тата «Санди экспресс» хаçатсем курăнмалли вырăнта агентствăсем Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмах çинчен пĕлтернине пичетлеççĕ. Çак хаçатсем Г. М. Маленков юлташ водородлă бомба çинчен пĕлтернине уйрăммăн палăртаççĕ, çакăнпа пĕрлех вăл ытти ыйтусем тăрăх каланисем çинчен те çыраççĕ.

ФРАНЦИ

ПАРИЖ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер тухнă хаçатсем «Юманите-диманш» тата «Журналь дю диманш» хаçатсем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмах çинчен пĕлтереççĕ.

«Юманите-диманш» ятлă хаçат Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕн содержанийĕ çинчен кĕскен çырса пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Хаçат Совет Союзĕн мире юрататан политикине, вăл тĕнчери мĕнпур тавлашуллă ыйтусене татса пама тăрăшнине палăртать. Хаçат СССР бюджетне мир тата халăх массисен ырă пурнăçĕн бюджечĕ тесе хак парать.

ПАРИЖ, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Водородлă бомба çинчен пĕлтерни Парижри çынсене питех те интереслентерчĕ, анчах ку вăл тĕлĕнтерекен хыпар пулман. Кунта, чи малтан, Совет правительствин пуçлăхĕ хăйĕн çĕршывĕ мирлĕ шухăш тытни çинчен сĕнĕрен шантарса калама тăрăшнине палăртаççĕ. Унăн çĕршывĕ халĕ ĕнтĕ водородлă бомба хăтĕрлемелли секрета пĕлет, тесе палăртса хăварса, вăл СССР миршĕн тăрăшнине тата вăрçă тухас-мĕн пулсан Совет Союзĕн пысăк вăй пуррине кăтартса парасшăн пулнă пулмалла.

Хăех те паллă, кунта Маленков Франци тĕлĕшпе ăшшăн каланине тивĕçлипе палăртса хакланă.

ПАРИЖ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Парижра тухнă хаçатсенче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх çырнă информацисемпе комментарисем хушшинче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмах тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Пур хаçатсем те çак сăмах çинчен малтанхи страницăра пысăк заголовоксемпе пĕлтереççĕ.

«Юманите» хаçат Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен икĕ страницăра тĕплĕн çырса пĕлтернĕ тата «СССР — мир ĕçĕн хăвачĕ» текен умстатья пичетлесе кăларнă. Хаçат совет халăхĕ мирлĕ хуçалăх строительствинче пысăк çитĕнÿсем тунине палăртать.

Маленков юлташ хăйĕн сăмахĕнче Франци çинчен калани пирки чарăнса тăрса, «Юманите» çапла çырать: «çак туслăн каланă сăмахсем Францири ĕçсыннисемпе патриотсен туйăмне пĕтĕмпех тивĕçтереççĕ. Вĕсене пирĕн çĕршывра ăшшăн йышăнса илчĕç».

Жан-Морис Эрман «Либерасьон» хаçатăн умстатьинче çапла çырать: водородлă бомба çинчен пĕлтерсе, Г. М. Маленков, пĕрре те хăратмасть. Пачах тепĕр майлă Вăл СССР мĕнпур çĕршывсемпе, вăл шутра США-па та, мирлĕн пурăнасси çинчен мирлĕ калаçусем ирттерме хатĕр тăнине çирĕплетсе парать.

Г. М. Маленков юлташ Франци çинчен каланă сăмахсем пирки «Либерасьон» хаçат çапла çырать: «Пирĕн ятпа туслăн тата асăрхаттарса калани çине, пĕрле хĕн-хур курни тата пĕрле гитлеризма хирĕç çапăçни çинчен аса илтерсе калани çине, Германи фашизмне тепĕр хут çĕклентерни пирĕншĕн хăрушлăх пулса тăни çинчен аса илтерсе калани çине, 1944 çулта пирĕн икĕ çĕршыв хушшинче туса хунă «чаплă та ырă союз çинчен» аса илтерни çине мĕнле француз тимсĕррĕн пăхма пултартăр? 1944 çулта тунă союз халĕ те вăйне çухатман-ха, ун çинчен, тен, Бидо господин маннă пулĕ?..»

«Фигаро» хаçат Г. М. Маленков сăмахне «Хĕвеланăçне шухăша ярас тата ăна пĕр-пĕринчен уйăрас» тĕллевпе каланă сăмах вырăнне хума пăхать.

«Монд» хаçат Г. М. Маленков сăмахĕ çинчен тĕплĕн çырнине пичетлесе кăларнă тата ку сăмах пирки ытти çĕршывсенче мĕнле шутлани çинчен пĕлтернисене нумай çырнă.

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ

БЕРЛИН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Берлинра тухса тăракан пур хаçатсем те СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕнче каланă сăмах çинчен пĕлтереççĕ. «Берлинер моргенпост», «Дер таг», «Телеграф» тата «Шпандауэр фольксблатт» хаçатсем малтанхи страницăсенче Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен пысăк заголовоксемпе пĕлтереççĕ, вĕсем Совет Союзĕн «водородлă бомба пуррине» палăртаççĕ.

Çак хаçатсем уйрăмах Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕн тулашри политика çинчен калакан пайĕ пирки тĕплĕн çыраççĕ. Г. М. Маленков Китай Халăх Республикине шута хумаллине пĕтерме кирли çинчен тата ăна ООН-ра законлă вырăн пама кирли çинчен каланă вырăна хаçатсем уйрăмах палăртаççĕ.

«Телеграф» хаçат Г. М. Маленков сăмахĕнче тулашри политика çинчен каланă шухăшсене кĕскен пилĕк пунктпа палăртать: 1. Германи ыйтăвне калаçусем ирттернипе татса пама пулать, 2. Экономикăн социализмла системипе капитализмла системинче тăракан çĕршывсем пĕр-пĕринпе мирлĕн пурăнма пултараççĕ, 3. Тĕнчери мĕнпур тавлашуллă ыйтусене тÿрĕлĕхлĕ калаçусем ирттернипе йĕркелесе яма пулать, 4. Совет Союзĕ нимĕнле территори те туртса илесшĕн мар, 5. Китай Халăх Республикине ООН-а илес пулать.

ИТАЛИ

РИМ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Италире тухакан хаçатсем Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕнче каланă сăмаха курăнмалли вырăнсенче пичетлесе кăларнă. «Унита» хаçат: Совет правительстви хăйĕн умне халăх пурнăçне лайăхлатас тата çĕршывăн экономикăлла хăватне ÿстерес задача кăларса тăратрĕ, тесе çырать. Хаçат çавăн пекех Совет правительстви Корейăна ура çине тăратма пĕр миллиард тенкĕ укçа уйăрса памалла туни çинчен çырать. «Унита» хаçат Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕнче «мир политикине тата США-па Америка килĕшÿллĕ пурăнма пултарнине» çирĕплетсе каланине палăртать.

«Паэзе сера» хаçат çакна кăтартса парать: СССР тавлашуллă ыйтусене, вăл шутра Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусене тивекен ыйтусене те, мирлĕ калаçусем ирттернипе татса пама хатĕр тăрать.

Сылтăмри хаçатсем Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕнче ССР Союзĕн водородлă бомба валли мĕн кирлисем пурте пур тесе каланă вырăна палăртаççĕ.

АВСТРИ

ВЕНА, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмах çинчен Венăри хаçатсем нумай çыраççĕ.

«Эстеррейхише фольксштимме» хаçат Г. М. Маленков юлташ тĕнчери политикăн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх, сăмахран—Корея, Германи тата Япони ыйтăвĕсем çинчен, Китай Халăх Республикине ООН-а йышăнма кирли çинчен, США-па çыхăну тытасси çинчен тата ытти ыйтусем тăрăх каланă сăмахсене илсе пичетлет.

Хаçат çавăн пекех ССР Союзĕн 1953 çулхи бюджетне тата Совет Союзĕнче промышленность производстви аталанса пынипе кăтартакан сведенисем пичетлет.

Францири забастовка вăйланса пырать

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер «Журналь офисьель» хаçатра правительство декречĕсене пичетлесе кăларни Францири ĕçсыннисен забастовкăлла кĕрешĕвне тата ытларах вăйлатса янă.

Почта, телеграф, телефон работникĕсен пĕтĕмĕшле забастовки иккĕмĕш эрне пырать ĕнтĕ. Забастовка ĕçсыннисем пĕрлĕхлĕ пулнине лайăх кăтартса парать. Правительство ĕçе мобилизацилесси çинчен решенисем йышăннă пулсан та тата забастовка тăвакан рабочисене суда парассипе, ĕçрен кăларса ярассипе хăратаççĕ пулсан та, сыхăну работникĕсем 220 пин çын çаплах кĕрешеççĕ.

Çырусем леçсе парас ĕçре çарсемпе тата полиципе усă курнине хирĕç забастовка тăвакансем пур çĕрте те хытăн протестлеççĕ. Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацине кĕрекен полици служащийĕсен профсоюзĕн Францири федераци бюровĕ полицейскисене почтальонсем вырăнне ĕçлеттернине хирĕç протестлет. «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Парижри Сурçĕр вокзалĕнче почта пушатма янă салтаксем забастовка тăвакан почта работникĕсемпе пĕрле пухăва хутшăннă, хăйсем почта работникĕсемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтернĕ.

Ĕнер Парижри ĕç биржинче митинг пулса иртнĕ. Митинга Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацине, Францири христианла ĕçсыннисен конфедерацине, «Форс увриер» тата автономиллĕ профсоюзсене кĕрекен сыхăну работникĕсем пурĕ 15 пин çын хутшăннă. Митингра забастовкăна малалла туса пыма тата тăвата профсоюз представителĕсенчен забастовка комитечĕ туса хума йышăннă. Комитет задачи вăл сыхăну работникĕсен пĕтĕм çĕршыври забастовкăлла кĕрешĕвне ертсе пырасси пулать. Забастовка комитетне тăвассишĕн профсоюз организацийĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса каланă.

Нор, Па-де-Кале, Мозель департаменчĕсенче шахтерсен забастовки малалла пырать. Çак департаментсенчи нумай шахтăсенче забастовкăна пĕтĕм шахтерсем хутшăннă.

Паян чугун çул работникĕсем тепĕр хут забастовка тума пуçланă. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, забастовка Францири чылай чугун çулсем çине сарăлнă.

Парижри вокзалсенче ирех ĕç чарăнса ларнă. Инçете çÿрекен поездсем çула тухса каймаççĕ. Хула сывăхĕнче çÿрекен поездсем те çÿреме чарăннă. Провинцисенче те çавăн пекех. Сурçĕр тĕлĕнче Лимож, Клермон-Ферран тата ытти хуласенчи чугун çул работникĕсем забастовка тума пуçланă.

Христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕн руководстви, чугун çул работникĕсен забастовкине пулăшма килĕшмен пулсан та, нумай вырăнсенче католикла профсоюзсен рядовой членĕсем, Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн, «Форс увриер» тата автономиллĕ профсоюзсен членĕсемпе пĕрле, забастовка тăваççĕ.

Паян ирхине Парижри метрора ĕçлекен работниксен пĕр пайĕ забастовка тума пуçланă.

Ирхине 8 сехетрен пуçласа Париж районĕнчи газ завочĕсенче тата Францири ытти нумай хуласенче рабочисем тепĕр хут забастовка тума тытăннă.

Забастовка тăвакан рабочисем ытти ыйтусемпе пĕрлех Наци пухăвне пухасси çинчен ыйту кăларса тăратаççĕ. Наци пухăвĕн правительство декречĕсене хирĕç пĕтĕм халăх протестленипе пулса тăнă лару-тăрăва сÿтсе явмалла.

Наци пухăвĕн председателĕ Эдуард Эррио ячĕпе парламент сессине халех пухма ыйтса çырнă нумай çырусем пыраççĕ. «Фран-Тирер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, социалистсен партийĕн секретарьчĕ çак требованипе килĕшнĕ.

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Каçхине тухнă хăшпĕр хаçатсем: Францири забастовка тăвакан рабочисемпе Ланьель правительстви хушшинче «чăнлипех вăйсене тĕрĕслесе пăхасси» пуçланнă, тесе çыраççĕ.

Хаçатсем паян ирхине правительство ларăвĕ пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ. Ларура забастовка тăвакан ĕçсыннисем, уйрăмах почта служащийĕсемпе чугун çул работникĕсем тĕлĕшпе йышăнмалли мерăсем çинчен сÿтсе явнă. «Государство ведомствисен ĕçне йĕркелесе тăрассине вăйлатасси» çинчен решени йышăннă. Çак тĕллевпе министрсен совечĕн председателĕ Жюли сумĕнче статс-секретарь ертсе пынипе ĕçлекен комитет туса хунă. Комитет «ĕçсем мĕнле пулса пынине куллен асăрхаса тăрать, тивĕçлĕ мерăсем çинчен решени йышăнать».

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, забастовка тăвакан рабочисене хĕсĕрлесси вăйланса пырать. Паян ирхине правительство забастовка тăвакан почта работникĕсемпе чугун çул работникĕсене вăйпа ĕçе тытăнтарасси çинчен кăларнă решение тепĕр хут çирĕплетнĕ. Департаментсенчи префектсем патне забастовка тăвакан рабочисене «мобилизацилесси» çинчен ятарласа циркулярсем ярса панă. Обществăлла ĕçсен, транспорт тата туризм министерстви, çавăн пекех чугун çулсен наци обществин управленийĕ забастовка тăвакан чугун çул работникĕсене хăратса пĕлтерÿсем пичетлесе кăларнă. Ĕнертен пуçласа полицейскисем забастовка тăвакан рабочисен килĕсене пырса, вĕсене ĕçе тытса каяççĕ.

Забастовка тăвакансене çакăн пек хĕсĕрлеççĕ пулсан та, забастовка çĕршывра çаплах вăйланса пырать.

Чугун çул работникĕсем паян тепĕр хут пуçласа янă забастовки паллă мар вăхăта пырать. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, паян çĕршывра пур çĕрте те поездсем çÿреме чарнă. Францири çĕр кăмрăк кăларакан нумай шахтăсенче забастовка тăваççĕ. Марсель хулинчи коммунальнăй предприятисенче ĕçлекен служащисем медицина персоналĕ, суту-илÿ флотĕнче ĕçлекен моряксем забастовка тăваççĕ.

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Дюнкеркран çапла пĕлтерет: паян 12 сехетрен пуçласа Дюнкеркра тăракан суту-илÿ флотĕнчи офицерсемпе матроссем забастовка пуçласа янă.

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Гавртан çапла пĕлтерет: кунта паллă пулнă тăрăх, металлурги промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисене пĕрлештерсе тăракан виçĕ тĕп профсоюз организацийĕ: Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕ, христианла ĕçсыннисен конфедерацийĕ тата «Форс увриер» правительство декречĕсене хирĕçлесе августăн 12-мĕшĕнче 24 сехетлĕхе пĕтĕмĕшле асăрхаттармалли забастовка ирттерме йышăннă.

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: газ завочĕсемпе электростанцисенче ĕçлекен работниксен «Форс увриер» профсоюз организацине кĕрекен федерацийĕ хăйĕн членĕсене ĕç пăрахма чĕнсе каланă.

ПАРИЖ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францири радио пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацине кĕрекен горняксен федерацийĕ пĕтĕм çĕршывра пĕтĕмĕшле забастовка пуçласа янă.

А. Я. ВЫШИНСКИЙ, А. М. БАРАНОВСКИЙ тата К. В. КИСЕЛЕВ НЬЮ-ЙОРКА ПЫРСА ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 11-мĕшĕнче Нью-Йорка Генеральнăй Ассамблейăн çиччĕмĕш сессийĕн Корейăра перемири тунă май пухăнакан виççĕмĕш пайĕн ĕçне хутшăнма СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн пĕрремĕш заместителĕ, Совет Союзĕн ООН-ри яланхи представителĕ А. Я. Вышинский пырса çитнĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Нью-Йорка Украинăн Ассамблейăри делегацийĕн пуçлăхĕ, УССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ А. М. Барановский тата БССР делегацийĕн пуçлăхĕ, БССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ К. В. Киселев пырса çитнĕ.

Шупашкар—Етĕрне—Шупашкар маршрутпа

Августăн 8—9-мĕшĕсенче Шупашкар—Етĕрне—Шупашкар маршрутпа велосипедистсен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Малтанхи кун Шупашкартан Етĕрнене — 80 километра 2 сехет те 58 минут та 35 секундра «Колхозник» спорт обществин членĕ П. Бакараев тата динамовецсем Г. Дубровинпа П. Кольцов пĕр вăхăтра чупса тухнă. Командăсенчен «Колхозник» спорт обществин команди малта пулнă.

Августăн 9-мĕшĕнче ăмăрту участникĕсем Етĕрнерен Шупашкара килме тухнă. П. Бакараев (Сĕмĕрле районĕ), ыттисене чылай кая хăварса, малта пынă. Шупашкара çитесси 15 километр юлсан, ăна динамовец Г. Дубровин хăваласа çитсе иртсе кайнă. Вăл Етĕрнерен Шупашкара велосипедпа 2 сехет те 47 минут та 57 секундра чупса çитет. Çапла вара вăл, 160 километра 5 сехет те 46 минут та 32 секундра чупса тухса, малти вырăна йышăнать. Иккĕмĕш вырăна П. Бакараев, виççĕмĕш вырăна В. Мальцев йышăннă.

Командăсенчен пĕрремĕш вырăна «Колхозник» спорт обществин команди тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта—«Медик», виççĕмĕш вырăнта—«Спартак» спорт обществисем.

Футбол

Республикăра мала тухассишĕн

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарти «Энергия» спорт обществин стадионĕнче футбол вăййипе республикăра мала тухассишĕн пыракан ăмăртăвăн черетлĕ вăййи пулса иртрĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» ялхуçалăх артелĕнчи «Колхозник» спорт обществин футболисчĕсем Шупашкарти динамовецсемпе тĕл пулса вылярĕç. Вăйă 3:2 шутпа, динамовецсем çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Пысăк тупăш илеççĕ

СОВЕТСКИ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз хăяр, симĕс сухан тата тĕрлĕрен çырласем сутса 20 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Колхоз пахчинче халĕ помидор, арбуз, дыня тата ытти çимĕçсем те лайăх çитĕнеççĕ. Помидор пиçсе çитнĕ.

Р. АЛЕКСАНДРОВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Мирпе халăхсен хăрушсăрлăхне сыхласа хăвармалли политика («Правда» хаçатăн кăçалхи августăн 13-мĕшĕнчи умстатьи).

В. Кузнецов.—Халăх хушшинчи политикăлла докладсем.

В. Сергеев.—Парти организацийĕ коммунистсем умне пысăкрах требованисем кăларса тăратать.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ.

СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче.

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн ĕçĕсем çинчен тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахĕ çинчен урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ.

Урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатăн çитес номерĕ 1953 çулхи августăн 16-мĕшĕнче тухать.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

СОВЕТ КИНОИСКУССТВИН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ ВЕНЕЦИЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

РИМ, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 10-мĕшĕнче Венецие, пĕтĕм тĕнчери 14-мĕш кинофестивале, совет делегацийĕн членĕсем пырса çитнĕ. Делегацие Н. Семенов ертсе пырать.

Совет Союзĕн представителĕсене Венецири художество выставкин комитечĕн председателĕ Джованни Понти, сенатор кинофестиваль директорĕ Петруччи йышăннă. Вĕсем хăйсен саламлă сăмахĕсенче кăçал кинофестивале Совет Союзĕ хутшăнма килĕшнĕшĕн кăмăллă пулни çинчен, çавăн пекех Совет Союзĕ кинофестивале хутшăнни Италире те тата унăн тулашĕнче те пурне те савăнтарасси çинчен каланă.

Н. Семенов хăйĕн ответлă сăмахĕнче çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери 14-мĕш кинофестивальре совет фильмĕсене кăтартни Совет Союзĕпе Итали кинематографийĕ хушшинчи туслăха тĕреклетес ĕçре çĕнĕ утăм пулса тăрать, ку вăл Совет Союзĕпе Итали хушшинчи ĕçлĕхлĕ тата культурăллă çыхăнусене лайăхлатма пулăшать.

Фестиваль августăн 11-мĕшĕнче каçхине ачасем валли кăларнă документлă тата кĕске метражлă фильмсене кăтартнипе пуçланнă.

ТЕГЕРАНРИ КОММУНАЛЬНĂЙ ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕН РАБОЧИСЕН ЗАБАСТОВКИ ЧАРĂННĂ

ТЕГЕРАН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Шаджаат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тегеранри коммунальнăй предприятисенче ĕçлекен рабочисен забастовки рабочисем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Предприяти хуçисем рабочисен ыйтăвĕсене тивĕçтерме килĕшнĕ.

Корейăра тыткăнри çар çыннисене тавăрса пани

ПЕКИН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ: августăн 10-мĕшĕнче Корейăпа Китай енĕ тепĕр енне тыткăнри 388 çынна тавăрса панă. Вĕсем хушшинче 188 кореец, 125 американец, 50 акăлчан, 25 турок.

Тепĕр енĕ Корея Халăх çарĕн тыткăнри 2.065 çынне тата Китай халăх добровольцĕсене 691 çынна тавăрса панă.

Августăн 10-мĕшĕнче, тенĕ корреспондент пĕлтернинче, тепĕр енĕн тыткăнри çар çыннисене йышăнса илмелли пунктра киревсĕр ĕç пулса иртнĕ. Грузовиксем тыткăнри çар çыннисен пĕрремĕш ушкăнне пирĕн йышăнмалли пункта илсе пынă чухне тепĕр енĕн территорийĕнче граждана тум тăхăннă агентсем кĕтмен çĕртен пирĕн енĕн тыткăнри çар çыннисем çине чулсемпе пеме пуçланă, вĕсенчен виççĕшне амантнă. Корейăпа Китай енĕн тыткăнри çар çыннисене репатриацилес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссири представителĕ çакăн пирки протест панă, çакнашкал ĕçсем малашне ан пулччăр тесе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма ыйтнă.

КИНО

«РОДИНА»—августăн 14-мĕшĕпе 15-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Свинарка и пастух», 16 сехетре тата 18 сехет те 15 минутра—«Запорожец за Дунаем», 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Учитель танцев» (пĕрремĕшпе иккĕмĕш сери).

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче

„ВАРВАРЫ"

(А. М. Горький пьеси)

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм-спектакль кăтартма пуçлаççĕ

Спектакле Государствăн Ленин орденлĕ академиллĕ Кĕçĕн театрĕ лартнă.
Фильм режиссерĕ Л. Луков.
Оператор М. Кириллов.
Рольсене выляна артистсем:
Е. Турчанинова, И. Ликсо, Н. Шамин, П. Оленев, П. Богатыренко, П. Головин, В. Орлова, Е. Велихов, Е. Гоголева тата ытти те.

Фильма М. Горький ячĕпе тăракан киностуди ÿкернĕ, 1953 çул.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 03311 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.